**Виталий Николаев**

# ТУРИ ЧĂВАШСЕМ

## (Историлле çырусем)

Çĕрпӳ
2011



**Николаев Виталий Николаевич:**
чăваш халăх академикĕ

**Кĕнекере автор, историлле литературăра тĕл пулакан фактсене тĕпе хурса, тури (вирьял) чăвашсем мĕнле пулса кайни çинчен хăй сĕнекен версие вулакансене ăнлантарса пама тăрăшать.**

# Автор çинчен

**Николаев Виталий Николаевич** 1936 çулта мартăн 15-мĕшĕнче Шупашкар районĕнчи Анаткас Тăрăн ялĕнче çуралнă. 1959 çулта Чăваш патшалăх пединститутне пĕтернĕ. 1972 çулч-чен Тинĕсçум крайĕнчи, Самар облаçĕнчи, Чăваш Енти, Алтайри тата Кузбасри шкулсенче биологипе химине вĕрентнĕ. Мускаври К.А. Тимирязев ячĕллĕ ялхуçалăх академинче радиолог специальноçне илнĕ те 1975 çултанпа Чăвашри ялхуçалăхне химизацилекен станцинче тĕп радиологра 2000 çулччен ĕçленĕ.

Вăл – Чăваш Республикинче ялхуçалăх радиологин службине йĕркелесе яракансенчен пĕри.

Чернобыльти атомла элктростанцинче пулнă авари хыççăн 1986 – 1992 çулсенче Брянск облаçĕн çĕрĕсем çинче сарăлнă радиоактивлă тасамарлăхсене тупса палăртнă тата вĕсене пĕтер-мелли мероприятисене йĕркелеме хутшăнса ĕçленĕ. Çак ĕçсене тимлĕ тунăшăн ăна Брянск облаçĕн агропромышленность комитечĕ 1987 çулта тата Раççей Федерацин ялхуçалăх министерстви 1996 çулта Хисеп грамотисем парса чысланă.

Радиоактивлă тата наркăмăшлă химилле япаласемпе тавра-лăха варалассине хирĕç кĕрешес енпе хаçатсенче çырса, радиопа каласа тата лекцисем вуласа халăхсем хушшинче экологи пĕлĕвĕсене сарас тĕлĕшпе вăл нумай вăй хунă. 1995 çулта ăна Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ ялхуçалăх ĕçченĕ ята панă. Вăл Раççей Федерацин тата Чăваш Республикин ĕç ветеранĕ.

Студент пулнă çулсенче вăл Алтайри тата Казахстанти уçнă çеремсем çинче туса илнĕ тырпула пухма хутшăннă. Уншăн ăна 1957 çулта «Çĕнĕ çĕрсене уçнăшăн» медаль тата 1958 çулта «Çĕнĕ çĕрсене алла илнĕшĕн» ВЛКСМ Тĕп комитечĕн значокне панă.

Пединститутра вĕреннĕ вăхăтра вăл студентсен наукăлла обществин активлă членĕ пулнă. Органикăлла хими тата ӳсентăрансен физиологи преподавателĕсем ертсе пынипе наукăлла экспериментсем тунă. Ку ĕçсем çинчен «Труды научного студенческого общества» (Чувашский педагогический институт, выпуск 1, Чебоксары, 1957) тата «Бюллетень Главного ботанического сада» (Академия наук СССР, выпуск 29, Изд. АН СССР, М., 1957) журналсенче статьясем пичетленĕ.

Виталий Николаев шкулта вĕреннĕ чухнех творчествăлла ĕçе тытăннă. «Качака» ятлă пĕрремĕш сăввине вăл 1945 çулта Ишлей районĕнчи Тăрăнти 7 çул вĕренмелли шкулта иккĕмĕш класра вĕреннĕ чухне çырнă. 1949 çулта унăн «Упа тытни» калавне Красноармейски районĕнчи

Çавалçырмари çичĕ çул вĕренмелли шкулти стена хаçатĕнче çырса кăларнă. 1951 çулта Ишлей районĕн хаçачĕ унăн «Пĕрлешнĕ колхозра» сăввине пичетленĕ. Çав çулах Аслă атте вăрçинче пулнă пĕр çын каланă тăрăх çырнă «Чĕлхе тытни» пьесине Красноармейски районĕнчи Енĕшкасси клубĕнче Çавалçырмари çичĕ çул веренмелли шкул ачисем лартнă.

1960 çулсенче вĕрентӳ ĕçĕнче хăй сĕнекен çĕнĕлĕхсем çинчен çырнă статьйисем РСФСР Çутĕç министерствин Мускавра тухакан «Химия в школе» журналĕнче пичетленнĕ. ,çре палăрнă çынсемпе тăван тавралăх çинчен çырнă унăн очеркĕсем, сăввисемпе калавĕсем, повĕçĕсем тăтăшах республикăри хаçат-журналсенче кун çути кураççĕ.

Вăл – хăй тĕллĕн вĕреннĕ музыкант. Юрăсем те кĕвĕлет. Хăйĕн шăллĕ Изосим Николаев çырнă «Казахстан хирĕнче» сăввипе 1954 çулта кĕвĕленĕ пĕрремĕш юррине Красноармейски районĕнсчи Ямайкасси клубĕнчи çамрăксен хорĕ халăх умĕнче юрланă. Ун чухне вăл Ямайкасси клубĕн заведующийĕ пулса ĕçленĕ. Унтанпа хăйĕн тата чăвашсен, вырăссен поэчĕсен сăввисепе çĕр ытла юрă кĕвĕленĕ. Вĕсене «Чĕре юррисем» кĕнекере пичетленĕ. Унăн темиçе юррине Чăваш патшалăх академилле юрăпа ташă ансамблĕ хăйĕн репертуарне кĕртнĕ, вĕсене Чăваш радиопа итлеме пулать.

Виталий Николаев – Чăваш халăх ăсхакăлĕпе ӳнер академийĕн чăн членĕ. Тури чăвашсен тата 1236 çулта Батый хан Atăлçи Пăлхар патшалăхне пăхăнтарнă хыççăн йĕркеленĕ, кайран 1797 çулта тин пĕтернĕ Тăрăн улусне (вулăсне) кĕнĕ хăшпĕр ялсен историне тĕпчет. Арçунакасси, Анаткас, Вăрманкас, Енĕшкасси, Кучак, Лепетер, Тарăрнçырма, Тăрăн, Типвар, Шинер, Ытмар тата Энтимĕркасси ялсĕнчи çынсен йăхĕсен пĕр 1630 – 2000 çулсен тапхăрĕнчи генеалоги йывăççисене тунă.

Унăн нумай калавĕсемпе повĕçĕсем «Икĕ кăвакарчăн» кĕнекере кун çути курнă. Вăл «Çырма хĕрринчи ял», «Тури чăвашсем», «Пăлхавçăсем», «Çапла пулнă», «Родословные арзюнакасинцев», «Родословные вурманкасинцев», «Родословные енешкасинцев», «Родословные итмарцев», «Родословные кочаковцев», «Родословные лебедерцев», «Родословные охоккасинцев», «Родословные тарансирминцев и эндимиркасинцев», «Родословные типварцев», «Родословные туруновцев», «Родословные шинерцев» историлле кĕнекесен тата ытти чылай кĕнекесен авторĕ.

# Малтан калани

Çын харпăр хăйĕн йăхĕнчи кашни çын çинчен кăна мар, халăхăн историне те кăка çитичченех тĕплĕн те анлăн пĕлесшĕн тăрăшать. Хăйĕн йăхĕн тата халăхĕн историне пĕлмен, ăна хисеплесе упраман çынăн чунĕ хавшак, чăлах. Кунашкал çын хăйне те, ыттисене те чăннипе хисеплеме пултараймасть.

Чăваш халăхĕ хамăр çĕршывра пурăнакан халăхсем хушшинче чи авалхисенчен пĕри, вăл пуçланса кайни ултă пин çула яхăн. Çакна чăваш чĕлхин истори паллисем çирĕплетсе кăтартаççĕ: чăваш чĕлхи алтай чĕлхисен ушкăнĕнчи чи авалхи турачĕ; сĕм авалхи тĕрĕк чĕлхи çĕнĕ эрăччен виçĕ пин çул малтан уйрăм чĕлхесене пайланса кайнă пулсан, чăваш чĕлхи çак вăхăтчен те маларах пуçланнă. (1). Эппин, чăваш халăхĕн историйĕ çав тери пуян. Унта пирĕншĕн пĕртте паллă мар тапхăрсемпе тĕрлĕрен пулăмсем темĕн чухлех. Çавăнпа чăвашсем мĕнле пуçланса кайнине тата сĕм авалтанпа вĕсем мĕнле пурăннине тĕпчесе пĕлме пĕртте çăмăл мар. Тĕпчевçĕсен çакна та шутра тытмалла: пурнăçри кирек мĕнле пулăма та ăна пĕр вăхăтрах сăнакан темиçе çынтан кашниех ыттисенчен уйрăм хăйне майлă ăнланать, кайран ун çинчен хăйне евĕр каласа парать. Эппин, авалхи çулçӳревçĕсем (сутуçăсем, çар ертӳçисем, урăх халăхсем патĕнче тыткăнра пурăннă хыççăн каялла таврăннисем, ятарласа ытти çĕршывсем тăрăх унти халăхсен пурнăçне сăнаса çӳрекенсем тата ыттисем те) çулта-йĕрте мĕн курнисене хăйсем ăнланнă пек каласа панă, вĕсем каланисене иртнĕ ĕмĕрсенчи историксем хăйсем ăнланнă евĕр улăштарса çырса хăварнă. Çак çырусене тишкерекен хальхи тĕпчевçĕсем каллех авал мĕн пулса иртнисене кашни хăй ăнланнă евĕр каласа ĕнентерме тăрăшаççĕ. Çакна пула тĕпчевçĕсен хушшинче пĕр-пĕрине ăнланманни тухать, истори чăнлăхĕсем пăтрашăнаççĕ. Çавăнпа чăваш халăхĕн историне тĕпчекен ăсчахсем, çак ĕçпе юлашки пĕр икçĕр*) çул тăршшĕнче тăрмашаççĕ пулин те, ăна ку таранчен те вĕçне çитиччен уçăмлăн татса параймаççĕ. Уйрăмах чăвашсем сĕм авалтан пуçласа çĕнĕ эрăри пĕр IV ĕмĕрченхи тапхăрта çĕр чăмărĕ çинче хăш вырăнсенче тата мĕнле пурăнни çинчен каланисем ытла та хирĕçӳллĕ.

Пире тата **тури (вирьял) чӑвашсем хӑҫан тата мӗнле пулса кайни**[**)] уйрӑмах хытӑ кӑсӑклантарать. Ҫакӑн ҫинчен чӑваш историкӗсем каланисене пурне те ӗненес пулсан вара – шалтах аптрама пулать. Ҫакна эпир пултарнӑ таран вararахпа ӑнлантарма тӑрӑшӑпӑр.

Ҫапла ӗнтӗ, чӑваш халӑхӗн сӗм авалхи историне тӗп-чесси, ҫак историн хӑшпӗр тапхӑрӗсенче тӗл пулакан пулӑмӗсене тӗрӗс уҫса кӑтартасси – ӑсчахсемшӗн паянхи кун та тата малашне те нумай вӑй хурса тумалли питӗ пысӑк та кӑткӑс ӗҫ шутланать.

---

[*)] Вырӑссен паллӑ историкӗ, этнографӗ тата географӗ В.Н. Татищев (1686 – 1750) «История Российская с самых древнейших времен» ятлӑ пилӗк томлӑ кӗнеке ҫырнӑ. Ку кӗнекен пӗрремӗш томӗ 1768-мӗш, юлашки томӗ 1848-мӗш ҫулта пичетленнӗ. Татищев ҫак кӗнекере чӑвашсем пӑлхарсенчен тухни ҫинчен пуҫласа каланӑ.

[**)] Кӗнекере аялтан туртса паллӑ тунисем пурте пирӗн. (В.Н.).

# Чăваш халăхĕ пуçланса кайни

**Ч**ăваш халăхĕ хăçан тата мĕнле пуçланса кайни çинчен тĕрлĕ вăхăтри ăсчахсем тĕрлĕрен калаççĕ: пĕрисем вĕсене хальхи чăваш çĕрĕнче чул ĕмĕрĕ вăхăтĕнче пурăннă çынсенчен пуçланса кайнă тесе шутлаççĕ, теприсем – хуннсен императорĕнчи сăварсенчен пулнă теççĕ, хăшĕсем – VII–XV ĕмĕрсенче Вăта Атăл тăрăхĕнче пурăннă пăлхар халăхĕпе çыхăнтараççĕ, çав хушăрах тата урăхла шутлакансем те пур.

Чăвашсем мĕнле пуçланса кайни çинчен китай историкĕсем çырса хăварнисенчен нумай пĕлме пулать.

Чăвашсен паллă ăсчахĕ Никита Яковлевич Бичурин (1777 – 1853) Китай çĕршывĕнче 1808 – 1823 çулсенче пурăннă. Вăл çав вăхăтра китайсен чĕлхипе калаçма та, çырма та тĕплĕн вĕренсе çитнĕ те, авалхи китай историкĕсем çырса хăварнă сайра тĕл пулакан сочиненийĕсене пуçтарса, вĕсене вырăсла куçарнă. Бичуринăн çак ĕçĕсене Раççейра пичетлесе кăларнă, тĕслĕхрен: Бичурин Н.Я. (Иакинф). Собрание сведений о народах, обитавших в Средней Азии в древние времена. Т. I-III. М.-Л., Изд. АН СССР, 1950-1953* Бичурин Н.Я. (Иакинф). Собрание сведений по исторической географии Восточной и Срединной Азии. Чебоксары, 1960 тата ыттисем те.

Паллă, Китайри авалхи историксем те, Бичурин та хăйсен ĕçĕсенче чăваш халăхĕн историне ятарласа çырман. Вĕсен ĕçĕсем тăрăх сĕм авал Китай таврашĕнче мĕнле халăхсем тата вĕсем мĕнле пурăнни çинчен пĕтĕмĕшле кăна пĕлме пулать. Çапла пулин те, хальхи ăсчахсем, Китай историкĕсен ĕçĕсене тĕпчесе, авалхи Китай халăхĕсем хушшинче чăвашсен ватă аслашшĕсем пулнине палăртнă.

Чылай ăсчахсен шучĕпе чăвашсен тĕп аслашшĕсем – хуннсем. Китай историнче авалхи хуннсене пуçласа çĕнĕ эрăчченхи ÕVIII ĕмĕрте асăннă. (3).

Тăватă пин çула яхăн каялла Алтайпа Байкалçум хирĕсенче Китайран тарса пынă çынсем (чурасем, влаçра тăракансем хĕсĕрленипе йывăр пурнăçа лекнисем) питĕ йышлăн пуçтараннă. Вăхăт иртнĕçемĕн вĕсем кунти вырăнсенче пурăнакан **динлинсемпе** (вăрман çыннисемпе) хутшăнса кайнă. Динлинсенчен укăр-финсем, чешсем, соарсем тата ытти хăшпĕр халăхсем пулса кайнă. (37). Динлинсемпе Китайран тарса пынă тĕрлĕ çынсенчен пулса кайнă çĕнĕ халăха, вĕсем кӳршĕллĕ

ытти халăхсене çаратса пурăннăран, китай хусахĕсем (хунхузсем) е **хуннсем** тенĕ.

Хуннсен пурнăç йĕрки ытла та хăйсене евĕрлĕ пулнă. Вĕсем çынна унăн тĕреклĕ те вăйлă пĕвне кура, ăсĕпе хастарлăхне пăхса хакланă. Çакнашкал çынсене суйласа палăртма кашни çуркунне ăмăртусем, вăйăсем ирттернĕ те ăрусенчи чи вăйлă арçынсене «паттăр» тенĕ. Çак паттăрсене йăхри хăйсем килĕштерекен кирек мĕнле хĕрарăма та пĕтĕ-лентерме ирĕк панă. Çак хĕрарăмсем çуратнă ачасене пĕтĕм йăх пĕрле пăхса ӳстернĕ. Çапла вара пурăна-киле хуннсем çӳллĕ пӳллĕ, вăйлă та чăрсăр, тĕреклĕ те тӳсĕмлĕ халăх пулса тăнă. Йăха ертсе пыма хуннсем ăрусем хушшинчи чи паллă паттăра суйланă, ăна улупаттăр (улпут) тенĕ. Çак сăмахранах юмахсенчи калама çук пысăк та вăйлă çынна пĕлтерекен «улăп» сăмах пулнă.

Темиçе çĕршер çулсем хушшинче хуннсем динлинсемпе е хутшăннă, е вăхăт-вăхăт вĕсенчен уйăрăлнă та. Çак хутăшусене пула пĕр-пĕрине çывăх чĕлхеллĕ тĕрĕк халăхсем пулса кайнă. Вĕсен шутĕнчех – чăвашсем те. Китайран çурçĕрелле Байкал тăрăхне тарса пынă çынсем çĕнĕ вырăнсене, вĕсем сивĕ пурăннăран, «сивĕ çĕр» (seveser) тенĕ. Çакна пула кунти халăхсене «савир» çыннисем тенĕ. Çак сăмахранах «север» тата «Сибирь» сăмахсем пулаççĕ. (2).

Савирсен выльăх кĕтĕвĕсенче ытларах вăкăрсемпе ĕнесем пулнă, çавăнпа вĕсен тотемĕ те (йăх палли) **вăкăр** пулнă. Çак тотеме пула савирсене **«укăр»** (угр) йăхĕсем тенĕ.

Çĕнĕ эрăчченхи 209 çулта хуннсен пĕр йăхĕнчен тухнă Модэ ятлă шаньюйĕ («шаньюй» сăмах «чи асли» тенине пĕлтерет) питĕ вăйлă Аслă Хунгари империне йĕркеленĕ. Хуннсен державин çĕрĕсем çав тери пысăк лаптăк йышăннă: тăршшĕ пилĕк пин тата сарлакăшĕ икĕ пин километра яхăн. Унăн çĕрĕсем тухăçра Пысăн Хинган тăвĕсем патĕнче пуçланнă, çурçĕр енче Байкал, Алтай, Балхаш таврашĕнче тăсăлса выртнă, анăçра – Арал тинĕсĕпе Памир, Гиндукуш тăвĕсем тăрăхĕнче, кăнтăр енче Куньлунь тăвĕсемпе Хуанхэ шывĕ патне çитнĕ. Модэне нумай-нумай тĕрлĕ халăхсем пăхăнса тăнă пулин те, çĕршывра вунă йăх тĕп вырăнта пулнă, çавăнпа çак ушкăна вунă йăхлă угрсем (вун + угр) е **венгрсем** тенĕ. Шăпах çав вăхăтранпа пыраççĕ ĕнтĕ хальхи «мадьяр» (Модэ çынни) тата «венгр» сăмахсем. Кунта çакна палăртни те вырăнлă**:** венгрсем ытти хуннсемпе хутăшса кайнăран

вĕсене хунн укăрĕсем (**hunuguri**) ят та панă, çавăнпа **Венгринче** пурăнакансем хăйсен çĕршывне халĕ те **Хунгари** теççĕ.

Хуннсен империнче халăхсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетсе, вырăнтан-вырăна куçса пурăннă (çулталăк хушшинче икĕ-виçĕ хутчен улăштарнă хăйсем тăнă вырăна). Вĕсен пиншер пуçлă пысăк кĕтĕвĕсенче питĕ нумай лашасем, ĕнесемпе вăкăрсем, сурăхсем тата вĕсемсĕр пуçне тĕвесем, ашаксем, качакасем пулнă. Нумайăшĕ сунара, пулла çӳренĕ. Çĕпĕрĕн кăнтăр пайĕнче пурăнакан хуннсем, кунти тăрăхра çĕнĕ эрăчченхи IV-I ĕмĕрсенче çанталăк нӳрĕ те ăшă тăнăран, çĕр ĕçне те тунă. Вĕсем пуринчен чылайрах вир акнă, хăмла ӳстернĕ, анчах ку ĕçсене ытларах ытти халăхсемпе вăрçнă чухне тыткăна хăваласа кайнă çынсене тутарнă.

Хуннсен питĕ вăйлă утлă çар пулнă. Унăн пиншер, çĕршер, вуншар çынтан тăракан ушкăнсене ĕмпӳсем, çĕр-пӳсем тата вунпӳсем ертсе пынă. Вĕсем çарта питĕ çирĕп йĕрке тытнă. Çар çыннисем уйрăмах ухăран питĕ ăста пенĕ. Хуннсен утлă çарĕ тапăнса пынă чухне тăшмана пур енчен те çиçĕм пек хăвăрт çавăрса илнĕ те малтан ун çине пĕлĕтпе хупланă евĕр ухă йĕпписем вĕçтернĕ, унтан сăнăсемпе чикме, хĕçсемпе касма, лашасемпе таптама тытăннă.

Шăпах çак тапхăрта ĕнтĕ, çĕнĕ эрăчченхи III ĕмĕрте çурçĕр енчен хуннсем вĕçĕмсĕр тапăнса килме тытăннăран, Китай çыннисем Гоби пушхирĕн кăнтăр енче Аслă стена туса лартнă**.** Унăн тăршшĕ анăçран тухăçалла тăвată пин километр тăсăлнă, çӳллĕшĕ 10 метр пулнă, стена тăршшĕпе кашни 100 метра яхăн сыпăкра хурал башнисем пулнă. Çак виçесĕр нумай хурал башнисенче тăратма патшалăхăн çар çыннисем çитмен те, çавăнпа Аслă стена хуннсем тапăнса кĕрессинчен сыхлама пултарайман. Апла пулин те çак стена чурасене, айăпа кĕнĕ çынсене Китайран çурçĕре хуннсем патне пысăк ушкăсемпе тарма чăрмантарнă. (3).

Модэ çĕнĕ эрăчченхи 174 çулта вилнĕ. Ун хыççăн Аслă Хунгари империн ханĕ пулса тăнă ывăлĕ Лаошань те ашшĕ евĕрлех çирĕп йĕрке тунă çĕршывра. Вăл хăйне пăхăнасшăн пулман Алтайри савирсен (чăвашсен) пĕр пайне Турфан оазисне куçарнă (çĕнĕ эрăчченхи 165 çулта). Вĕсем кунта **чеш** ятпа паллă пулнă, кунта пурăнакан **пăлхар** йăхĕсемпе (китайсем **пулу** тенĕ ку халăхсене) пĕрле Чеш патшалăхне тунă. (6* 7).

Çĕнĕ эрă пуçламăшĕнче Пысăк Хинган тăрăхĕнчи Сяньби тăвĕсем хушшинче пурăнакан пĕр йăх (авалхи монголсем) вăйланса каять. Çак йăха малтан Модэ хан хăйне пăхăнтарнă пулнă. Сяньби çыннисене вăл питĕ хытă хĕсĕрленĕ, вĕсене хисеплемен, империнче кĕтӳçсем е ахаль çар çын-нисем пулма кăна ирĕк панă. Çавăнпа сяньби çыннисем питĕ кăмăлсăррăн, савирсем çине тарăхса пурăннă. Çапăçма юратакан çак хаяр халăх 87-мĕш çулта çурçĕрти хуннсен тухăçри çĕрĕсем çине тапăнса кĕнĕ те вĕсен Юлю ятлă шаньюйне тыткăна илнĕ, ăна тискеррĕн асаплантарнă, пĕтĕм ӳчĕ çинчи тирне сӳнĕ. Анчах темĕншĕн-çке сяньбисем урăх вăрçса тăман, каялла кайнă. Апла пулин те сехри хăпнă хуннсем сапаланма тытăннă. Вĕсен аллă сакăр йăхĕ (кунта икçĕр пин çынна яхăн шутланнă, вĕсен шутĕнче сакăр пин çар çынни пулнă) кăнтăралла куçса кайса Китая парăннă. 89-мĕш çулта çуркунне çурçĕрти хуннсемшĕн каллех хăрушă пурнăç siксе тухнă. Ку хутĕнче вĕсем çине кăнтăрти хуннсен вăтăр пин çынлă утлă çарĕпе пĕрле китайсен сакăр пин çынлă çарĕ тапăннă. Вĕсем çурçĕрти хуннсен икçĕр пине яхăн çыннисене тыткăна илсе кайнă. Çак тăшмансем 93-мĕш çулта çурçĕрти хуннсене пĕтĕмпех аркатса янă. Анчах çурçĕрти хуннсем, чылай халсăрланнă пулин те, парăнма шутламан. Вĕсем Зайсан, Ала, Балхаш кӳллисем хушшинче тата Тарбагатайпа Джунгари Алатăвĕ хырçисем тăрăхĕнче çирĕпленнĕ те кунта 155 çулччен хăйсен тăшманĕсемпе çапăçса пурăннă.

156 çулта сяньбисем хăйсен ханĕ пулма вунпилĕк çулти пултаруллă та хастар Таншихая лартнă. Вара çак çамрăк хан ертсе пынипе 166 çул тĕлне пĕтĕм Аслă Хунгари империне тĕпрен аркатса янă, кунта хăйсем хуçаланма тытăннă, Сяньби империне туса хунă.

Ку хутĕнче Илипе Чу шывĕсен тăрăхĕнче пурăнакан çурçĕрти хуннсем çак тискер тăшмансенчен хăтăлас тесе Барабапа Караганда çеçенхирĕсене тухса тарнă. (2* 3* 4). Вĕсен шутĕнче авалхи чăвашсем те пулнă. Чăвашсен пысăк пайĕ пăлхарсемпе тата ытти хунн халăхĕсемпе пĕрле Кăнтăр Çĕпĕр хирĕсем урлă Аралпа Каспи тинĕсĕсем çывăхĕпе Ейĕкпе Атăл шывĕсем патне çитнĕ, кайран Çурçĕр Кавказа кайнă. Европăра вĕсене **гуннсем** тенĕ.

Гуннсем мĕнле пулса кайнине ХХ ĕмĕрти вырăссен паллă ăсчахĕ, историкĕ, географĕ, этнологĕ Л.Н. Гумилев акă еплерех ăнлантарать: «...Вăта Азинчен тухнă хуннсем 155-158 çулсенче Атăл çы-

ранĕсем патне çитнĕ те алансемпе тĕл пулнă. Çапла вара Каспипе Хура тинĕс çывăхĕнчи çеçенхирсенче лару-тăру тĕпренех тата нумайлăха улшăннă. ...анчах та 158 çултан пуçласа 350 çулччен хуннсен историнче мĕн пулса иртни пачах паллă мар. Кун пирки 200 çул хушшинче хуннсем çав тери улшăнса "Гуннсем" ятлă çĕнĕ этнос пулса кайнă тесе кăна калма пулать». (4).

200 çул хушшинче, тĕпрен илсен, Европăна куçса килнĕ хуннсен арçынĕсемпе Кăнтăр Урал тăрăхĕнче пурăнакан укăр халăхĕсен хĕрарăмĕсенчен çуралнă ачасенчен пулнă çĕнĕ халăха К.А. Иностранцев профессор сĕннипе "гуннсем" тесе ят пама килĕшнĕ. (30).

Алтайран анăçалла куçакан хуннсем çинчен Гумилев Л.Н. çапла çырнă: «Сяньби çыннисен хĕçĕсемпе ухă йĕппийĕсенчен таракан хуннсем хĕрарăмсемсĕрех тăрса юлнă теме пулать. Чăнах та, йĕнер çинче пĕр канмасăр 1000 кун каяссине сайра хунн хĕрарăмĕ тӳссе ирттерме пултарнă». «Миçе çын кайма пултарнă-ха анăçалла? Чи нумаййи – 20-30 пин çар çыннисем. Вĕсем ют çĕрсем тăрăх пĕр канмасăр каймалли çула тухма пултарайман арăмĕсемсĕр, ачисемсĕр, ваттисемсĕр пулнă, мĕншĕн тесен сяньби çыннисем вĕсене хыçран хăваласа пынă, ыв̆аннипе юлакансене пĕр шеллемесĕр вĕлернĕ. Çак 1000 кун хушшинче хуннсем тӳрĕрен 2600 км кайма пултарнă... Ытти чухнехи пек вăкăрсем кӳлнĕ урапасемпе куçса пынă пулсан, çак вăхăт хушшинче вĕсем çакăн чухлĕ каяйман пулĕччĕç. Çав хушăрах хыçран тапăнса пыракан сяньбисемпе час-часах çапăçусем пулса иртнĕ, унта хуннсен çар çыннисен çемйисем вилнĕ». (4).

Пирĕн шутпа, мĕне уйрăмах питĕ палăртса каламалла. *Зайсан кӳлли çывăхĕнчи авалхи чăвашсен пысăках мар ушкăнĕ 156 çулта сяньбисем хăваланипе хăйсем пурăннă вырăнтан тухса тарнă хыççăн Итрыш шывĕ çывăхĕпе Урал ен-нелле укăр-финнсем – вогулсем, остяксем тата ытти хăш-пĕр халăхсем – пурăннă çĕре куçма тытăннă.* «Финн» сăмах «сунарçă» тенине пĕлтерет.

Сăварсен пĕр ушкăнĕ ыттисенчен уйрăммăн Иртыш шывĕ тăрăх çурçĕрелле куçса кайнине ĕненмесĕр тĕлĕнмелли çук. Вăл акă мĕн пирки çапла пулма пултарнă. Аслă Хунгари империйĕн виçĕ ĕмĕр çурра яхăн тăсăлнă вăйлă хăвачĕ çĕнĕ эра пуçламăшĕнче хавшаса çитнĕ, импери яланлăхах арканма тытăннă. Çавăнпа çурçĕрти хуннсен (вĕсен шутĕнче сăварсен те) çирĕп патшалăх йĕрки пулман. Унсăр пуçне ыт-

тисенчен аякрарах пурӑнакан йӑхсен пуҫлӑхӗсен тапӑнса килекен тискер тӑшманран хӑтӑлса ӑҫталла тата хӑҫан тухса тарассине питӗ хыпаланса йышӑнма тивнӗ. Эппин, ҫак сӑлтавсене пула тата темӗнле урӑх чӑрмавсем хистенӗрен Зайсан кӳлли ҫывӑхӗнче пурӑнакан авалхи чӑвашсен (сӑварсен) пӗчӗк ушкӑнӗ Чеш ҫӗрӗнчен тухса тарнӑ ытти халӑхсемпе пӗрле анӑҫалла тӳрӗрен кайма пултарайман.

*Ҫапла ӗнтӗ, 155 ҫулта авлхи чӑвашсем Алтай ҫӗрӗ-сем ҫинче пурӑнни вӗҫленет те вӗсем ӳлӗмрен тури (вирьял) тата анатри чӑвашсем ҫине пайланасси пуҫланать.*

Кунта ҫакна асӑрхаттарни вырӑнлӑ. Чӑваш чӗлхинче анатри, тури, малти, кайри тесе каланисем тепӗр майлӑ кӑнтӑр, ҫурҫӗр, тухӑҫ, анӑҫ енчи тенине те пӗлтереҫҫӗ (кунашкал тӗслӗхсем уйрӑмах ялсен ячӗсенче тӗл пулаҫҫӗ: Анаткас, Турикас, Малтикас, Кайрикас).

❋ ❧ ❋ ❧ ❋

**Ч**ӑваш халӑхӗ пуҫланса кайнине сӗм авалхи **шумер** халӑхӗсемпе те ҫыхӑнтараҫҫӗ. Унта ҫакна татӑклӑн палӑртмалла: ку пӗртте чӑвашсем хуннсенчен пулса кайман тенине пӗлтермест, пачах урӑхла, чӑвашсен историне тата авалтарахри тапхӑртан пуҫласа тӗпченине кӑтартать. Мӗншӗн тесен Тигрпа Евфрат шывӗсем тӑрӑхӗнчи (Месопотамири) шумер ҫыннисен тухӑҫалла куҫса кайнӑ пӗр пайӗ шӑпах хунн халӑхӗсем пулса кайнипе ҫыхӑннӑ. Ҫакӑ вӑл акӑ мӗнлерех пулма пултарнӑ.

Шумер ҫыннисем Кӗҫӗн Азири Тигрпа Евфрат шывӗсем тавралла ҫӗнӗ эрӑччен виҫӗ пин ҫул ытларах ӗлӗк пурӑнма пуҫланӑ. Вӗсем Месопотаминче авалхи цивилизаципе патшалӑх тытӑмне пуҫарса янӑ. Тигрпа Евфратӑн анат вӗҫӗнче ҫирӗме яхӑн шумерсен хулисем пулни паллӑ. Ҫӗнӗ эрӑченхи ҫирӗм саккӑрмӗш – ҫирӗм ултӑмӗш ӗмӗрсенче ҫак хуласенчен ытларах Кеш (Чеш) хули вӑйлӑ аталаннӑ. Ҫакна пула пӗтӗм шумер хулисен ҫӗрӗсене Чешшар е Чеши патшалӑхӗ тенӗ. Ҫӗнӗ эрӑченхи 2007 ҫулта семит-аккадцем тапӑннипе шумерсен патшалӑхӗ яланлӑхах арканса кайнӑ. Чешшар вырӑнӗнче ҫӗнӗ эрӑченхиа II-мӗш пинҫулӑх пуҫламӑшӗнче ҫӗнӗ патшалӑх – Вавилон йӗркеленнӗ. Кунта семитсен чӗлхипе пӗрлех шумерсен чӗлхи те темиҫе ӗмӗр хушши патшалӑх чӗлхи шутланса тӑнӑ. Ҫӗнӗ эрӑченхи 1792-1750 ҫулсенче Вави-

лонта шумерсенчен тухнă Хамурappи патша хуçа пулнă. Ку çыннăн ятне хальхи чăвашсен чĕлхинче «хамăр аппи» /свой дядя/ тесе ăнланма пулать. (42).

Месопотаминчен аккадсем тапăннăран тухса кайичен шумерсем хуррит халăхĕпе тачă хутшăнса пурăннă. Çавăнпа та эпир хурритсем чăваш чĕлхине аталантарма пулăшнă тесе калама пултаратпăр. Çĕр ĕçлесе пурăнакан хурритсем шыв пурнăçра мĕнлерех хаклă шутланнине лайăх ăнланнă. Вĕсем хăйсен патшисене час-часах **атăль** сăмахпа хисеплесе чĕннĕ: Атальшен (Атăль çын), Аталь Шенни (Атăл çынни), Аталь Тешупе. Уйрăмах акă мĕн паллă: тахçан авалах чăваш чĕлхинче «**ç**» сасă пулнă, анчах та семитсен çырулăхĕнче ку сасса палăртма саспалли пулман. (42).

Тата çакна палăртмалла**:** тутлăхлă тăпраллă тата ăшă климатлă Месопотамине куçса киличчен шумерсен аслашшĕсем Вăта Азинче пурăннă. Эппин, тĕнчере климат улшăннипе Месопотаминчи оазиссем типсе пушхире куçма тытăнсан, шумерсен пĕр пайĕ каялла Вăта Азине куçса кайнă. (37).

Шумерсен культури вăйлă аталанни питĕ тĕлĕнтерет. Вĕсем хĕртнĕ кирпĕчĕ хатĕрлеме пултарнă, çӳллĕ çуртсем купаланă, каналсемпе пĕвесем тунă, кустăрмапа усă курнă, паянхи куна паллă Египет пирамидисене те шумер ăстисем ертсе пынипе купаланă. Вĕсен календарь пулнă. Нептун, Плутон, Уран планетăсем пуррине чухлани вĕсем астрономие лайăх пĕлнине кăтартать. Çакна та палăртмалла: хальхи христиан тĕнĕн никĕсĕ шутланакан библи кĕнекине семитсем Вавилонта çырма пуçланă, анчах та ку кĕнекен никĕсĕнче выртакан нумай тĕп ăнланусене семитсем шумер çыннисем тытса пынă тĕн йĕркисенчен илнĕ.

«Тĕнчене шыв илни» çинчен калакан халапа та шумер çыннисем сарнă. Тен, çĕнĕ эрăчченхи пĕр XXV ĕмĕрте Тигрпа Евфрат улăхĕсем пысăк шыв айне пулни шумерсемшĕн, чăн та, «пĕтĕм тĕнчене шыв илнĕн» туйăннă. Çакнашкал тĕнчене шыв илнĕн туйăнакан хăрушă вăхăтсем Çĕр чăмăрĕн историнче вунă пин çул ытларах каялла чăннипех пулнă. Ытти вырăнсенче вара çав вăхăтра пачах урăхла – «тĕнчипе шыв типнĕ» тесе калама та пулать. Çакăн сăлтавĕ акă мĕнре. Вăта çĕр тинĕсĕ тахçан авал Еврази материкĕн территорийĕнче анăçра Атлантика океанĕнчен пуçласа тухăçри Пысăк Хинган тăвĕсем таранах ка-

лама çук анлăн сарăлса выртнă. Еврази материкĕн çурçĕр енчи пайне пиншер çулсем хушши хупаласа тăракан пăрлăхĕсем ирĕлме пуçласан (пĕр вунпиллĕк-вунă пин çул каялла), унтан юхса анакан тăварсăр шывсем Вăта çĕр тинĕсĕн шайне питĕ вăйлăн хăпартса янă. Тинĕс татах та анлăрах сарăлса кайнă. Çак тинĕс айĕнче Раççейĕн хальхи Краснодар, Ставрополь крайĕсен, Калмăк республикин, Дон çинчи Ростов, Волгоград, Саратов, Астрахань облаçĕсен тата Казахстан, Узбекистан, Туркменистан çĕрĕсем, Кулундапа Бараба çеçенхирĕсем пытанса выртнă. Вăта çĕр тинĕсĕ малалла хĕвелтухăçнелле Тань-Шаньпе Алтай тăвĕсем хушшипе Такла-Макан, Алашань тата Гоби пушхирĕсене хупласа тăнă. Анчах та, çĕр чăмăрĕн Индостан литосфера плити Еврази плитин хĕвелтухăç енчи хĕррин айне ерипен шуса кĕрсе пынăран, Еврази плити ку енчен палăрмаллах çĕкленнĕ. Ку тăрăхра час-часах çĕр чĕтреннĕ. Вăта çĕр тинĕс тĕпĕ палăрмаллах çĕкленсен, унăн шывĕ Атлантикăпа Инди океанĕсене юхма тытăннă. Çак тинĕсĕн хĕвелтухăçĕнчи пайĕ пĕр вăхăт хăйне пӳлсе тăракан Тянь-Шаньпе Алтай тăвĕсем хушшинчи Джунгари ту каççи патĕнче капланса тăнă-тăнă та сасартăк çак ту каççине çурса янă. (Хальхи вăхăтра çак çурăк Джунгари хапхи е Каптагай ту хушăкĕ шутланать, унăн тăршшĕ 50, сарлакăшĕ 10, çӳллĕшĕ 3 километр). Вара темĕн чухлĕ шыв анăçалла вирхĕннĕ. Вăл хăйĕн çулĕ çинчи пĕтĕм тӳремлĕхсемпе айлăмсене хупласа хунă, çав вăхăтрах унăн хĕвелтухăç енчи тĕпĕ типпе тухнă. Кунта хальхи тӳремсем, айлăмсем çаралса юлнă, путăк вырăнсенче кӳлĕсем пулса тăнă. Хура тинĕс, Азов, Каспи, Арал тинĕсĕсем, Байкал, Балхаш, Иссык-Куль, Алаколь, Зайсан тата ытти нумай кӳлĕсем пĕтĕмпех Вăта çĕр тинĕс тĕпĕ типпе тухнă хыççăн кунти путăксенче тăрса юлнă шыв кӳлленчĕкĕсем шутланаççĕ.

Çапла ĕнтĕ, çĕнĕ эрăччен пĕр виçĕ пин çул каялла Тигрпа Евфрат шывĕсен улăхне пысăк шыв хупласа илсен, шумер çыннисем кунтан таврари сăртлă-туллă вырăнсене тухса тарнă. Хăшĕсем пурăнма юрăхлă çĕнĕ çĕрсем шыраса хĕвел-тухăçнелле куçса кайнă. Вĕсен пĕр пайĕ Кăнтăр Çĕпĕр еннелле куçнă та кунта пурăнакан **динлин** çыннисемпе хутшăнса кайнă. (37). Тепĕр пайĕ Вăта Азинче пурăнакан чи малтанхи тюрксен **син** (çын) йăхĕсемпе хутшăнса **сер** халăхне туса янă. Сер çынисем çĕнĕ эрăченхи 2824 çулта питĕ хăватлă Сирики гос-

ударствине йĕркеленĕ, вăл Балхашпа Зайсан кӳллисенчен кăнтăр еннелле выртакан лаптăкра вырнаçнă. Шăпах çак çултан пуçланать авалхи пăлхар-чăвашсен календарĕ. Эппин, хальхи 2006 çул, авалхи пăлхар-чăвашсен календарĕпе шутласан, 4830 çулпа танлашать.

Апла пулсан, çĕнĕ эрăчченхи 2824 çула эпир чăваш халăхĕ пуçланса кайнă çул вырăнне шутлама пултаратпăр.

Çĕнĕ эрăчченхи 1327 çулта Серики патшалăхне кĕрекен Турфан путăкне шыв илет. Çавăнпа та çакăнта пурăнакан сер çыннисен пĕр пайĕ Наньшань тăвĕсем (Пржевальски ту хырçи) çине тарать, вĕсенчен кайран **узбек** халăхĕ пулса каять. Тепĕр пайĕ хальхи Монголи çĕрĕсем çине куçса кайнă, кунта вĕсем Китайран тарса пынă хуннсемпе хутăшса каяççĕ. Серсен виççĕмĕш пайĕ (çак пайри **сер** çыннисем **чăвашсен тĕп аслашшĕсем** шутланаççĕ) Зайсан кӳллине юхса кĕрекен Хура Иртыш шывĕ патнелле куçса каять. Кунта вăл вăхăтра хирти укăр халăхĕсен вунă йăхĕнчен пĕри **савир** халăхĕ пурăннă. Куçса килнĕ серсемпе савирсенчен пулса кайнă çĕнĕ халăха китай çыннисем жуно-угр (варвăр-укăр) е **джунгар** халăхĕ тенĕ. Çапла вара **чăвашсен** тĕп аслашшĕсемпе укăрсен (**венгрсен**) тĕп аслашшĕсен юнĕ пуçласа хутăшнă. (3; 5; 6; 7).

✵ ❧ ✵ ❧ ✵

# Тури чӑвашсем Вӑта Урал тӑрӑхӗнче

**Ч**ӑваш Республикин территорийӗнче пурӑнакан чӑвашсем хӑйсене икӗ пысӑк тӗп ушкӑна пайлаççӗ: тури (вирьял) тата анатри чӑвашсем. Тури чӑвашсем, тӗпрен илсен, республикӑн çурçӗр пайӗнче, анатрисем ытти вырӑнсенче пурӑнаççӗ. Чӑвашсем хӑйсене тури тата анатрисем çине пайласси сӗм авалтанпа пыракан йӗрке.

Анчах та хӑшпӗр ӑсчахсем чӑвашсене тури тата анатри ушкӑнсене пайланине вӗсем Атӑл шывӗн юххипе танлаштарсан пӗрисем теприсенчен турарах тата анатрарах пурӑннине шута илсе кӑна ӑнлантарма пикенеççӗ. (38). Пирӗн шутпа, çакна пӗртте ӑнӑçлӑ теме çук. Чӑн та, Атӑл юххи тӑрӑх танлаштарса шутласан, кашни чӑваш ялӗ пӗр вӑхӑтрах пӗриншӗн тури, теприншӗн анатри пулать. Эппин хӑш ялӗнчен пуçламалла-ши чӑвашсене тури тата анатри ушкӑнсене пайлама? Тӗрӗссипе, пирӗн шутпа, куна акӑ мӗнле ӑнлантармалла: чӑвашсен çак икӗ ушкӑнӗ хушшинче авлхи вӑхӑтра пӑлхар йӑхӗсен шутне кӗрекен урӑх халӑхсем пурӑннӑ, çавна пула çак халӑхсенчен çурçӗререх пурӑнакан чӑвашсене турисем, кӑнтӑрарах пурӑнаканнисене анатри чӑвашсем тенӗ. Чӑвашсене çакӑ икӗ пысӑк ушкӑна пайласси Çурçӗр Кавказри Сӑвар княжествинче пурӑннӑ сӑварсем (чӑвашсем) 732-737 çулсенче арабсем Хасар каганатне хытӑ тустарнӑ хыççӑн Вӑта Атӑл тӑрӑхне – Пысӑк Çарӑмсан шывӗ таврашне – куçса килсен пуçланнӑ.

Тури чӑвашсемпе анатрисем пӗр-пӗринчен Чӑваш çӗрӗнче тӗрлӗ вырӑнта пурӑннипе, йӑла-йӗркисем тата калаçу чӗлхи-сем урӑхларах пулнипе кӑна мар, вӗсенчен те ытларах хӑйсен авалхи историйӗпе уйрӑлса тӑраççӗ. Апла пулин те хальхи вӑхӑтра истори ӑсчахӗсенчен хӑшӗ-пӗрисем пӗтӗм чӑваш халӑхӗн историне йӑлтах анатри чӑвашсен историйӗпе кӑна çыхӑнтарса ӑнлантарма пикенеççӗ.

Вӗсем каланӑ тӑрӑх, 1236 çулччен тӗнчере тури чӑвашсем пачах пулман. Бату хан çарӗсем Атӑлçи Пӑлхар патшалӑхне пӑхӑнтарсан, анатри чӑвашсен пӗр ушкӑнӗ çак тискер тӑшмансенчен хӑранипе Атӑлӑн сылтӑм çыранне тарса каçнӑ та Çавалпа Сӑр шывӗсем хушшинчи вӗçӗ-хӗррисӗр тӑсӑлса выртакан вӑрмансенче пурӑнакан çармӑссем патӗнче пытаннӑ. Пурӑна-киле çак анатри чӑвашсенчен, çармӑссемпе хутӑшса пурӑннӑран, тури чӑвашсем пулса кайнӑ. Çакнашкал ӗнентерсе калани хӑш-пӗр ӑсчахсен шучӗпе питӗ ансат та

пурне те ăнланмалла пек туйăнать. Çапла шутлакан ăсчахсем хăйсем çирĕплетсе каланипе килĕшменнисене тӳрех татса хураççĕ: «Тури чăвашсем пулса кайни çинчен авлхи паллă историксем кам та пулин урăхла калани пур-и? Авалтан никам та нимĕн те çырса хăварман пулсан, эппин, урăхла пулма та пултарайман».

Анчах та, пирĕн шутпа, кунашкал ĕнентерме тăрăшнине нимĕн кăлтăксăр теме çук.

Чăн та, сăмах çук, тĕрĕсех, 1236 çул хыççăн Бату хурахĕсенчен пытанасшăн Çавалпа Сăр шывĕсен тăрăхне анатри чăвашсем питĕ йышлăн куçса пынă. Анчах та çак тапхăрччен ку вырăнсенче чăвашсем пурăнман, çармăссемпе мордвасем кăна пулнă тесе татăклăн калама пулать-и-ха? Тата кунта чăвашсем те пурăнни çинчен авлхи Перси, Рим, грексен тата ытти паллă халăхсен историкĕсем кам та пулин çирĕплетсе çапла калани пур-и?

Çапла**,** кун пек пат татса каланисем çук. Апла пулин те хальхи сахал мар паллă историксем Атăлпа Кама таврашĕнче чăвашсем кунта пăлхар йăхĕсем 670-мĕш çулсенче Çурçĕр Кавказран куçса киличчене х пурăнма пултарнă тесе шутлаççĕ (кун çинчен «Тури тата анатри чăвашсем Анат Кама тăрăхĕнче» сыпăкра тĕплĕнрех каласа парăпăр).

Эппин, тури чăвашсем 1236 çул хыççăн тин пуçланса кайман.

Пирĕншĕн пулсан, тури чăвашсем çĕнĕ эрăри 1236 çул хыççăн мар, пачах урăхла, 155 çул хыççăн (е, тата урăхларах пулсан, çĕнĕ эрăчченхи 165 çул хыççăн) пулма пуçланă тени ĕнентерӳллĕ. Тепĕр майлă каласан, тури чăвашсем пуçланса кайнăранпа ку таранчен çичçĕр утмăл çул мар, пин те сакăрçĕр аллă е 2170 çула яхăн иртн**ĕ.**

Çакна акă мĕнле ăнлантарма пулать.

Алтайран тухнă хыççăн Çурçĕр Кавказпа Азов тинĕсĕ таврашĕнче пăлхарсен ытти йăхĕсемпе пĕрле пурăннă **сăварсем (чăвашсем)** каярахпа (732-737 çулсенче) Вăта Атăл тăрăхне çитсе вырнаççан, **анатрисем** пуласа тăраççĕ. Вĕсем пысăк йышлă пулнă, тулли пурнăçпа пурăннă, вĕсен хыççăн археологи материалĕсем нумай юлнă. Çак материалсемсĕр пуçне анатри чăвашсем авал мĕнле пурăнни çинчен эпир урăх япаласем тăрăх та пĕлетпĕр. Акă, тĕслĕхрен, сĕм авалтанпах вăйлă аталаннă Китай, Перси, Рим, Греци, Европăри ытти çĕршывсенчи çулçӳревçĕсем, сутуçăсем, çар ертӳçисем хăйсем пулса курнă вырăнсенчи пăлхарсен, чăвашсен тата ытти халăхсен пурнăçĕ çинчен

тĕплĕн каласа пама пултарнă. Çакнашкал калавсем тăрăх авлхи ăсчахсем тĕрлĕрен халăхсен историне çырнă. Çак çырусем тĕнчери паллă библиотекăсенче, архивсенче упранаççĕ. Çав çырусемпе усă курса, хальхи вăхăтра историе тĕпчекенсене анатри чăвашсен кунçулĕ, ĕçĕхĕлĕ çинчен пĕлме çăмăл та шанчăклă.

Икĕ пин çула яхăн каялла Иртыш шывĕ тăрăхĕнчи вăрманлă çеçенхирсемпе шурлăхлă-путăклă вырăнсем урлă çурçĕрелле çула тухнă săварсен (чăвашсен) тепĕр пысăках мар ушкăнĕ (пулас **тури чăвашсем)** хыççăн выртса юлнă тир-сăрантан, кĕççерен е йывăçран тунă япаласем тахçан-авалах çĕрсе тусан пулнă. Çак чăвашсем мĕнле пурăнни çинчен никам та нимĕн те каласа пама та, çырма пултарайман. Вăл вăхăтра кунти хаяр та тискер тăрăхра сутуçăсен караванĕсем те, тĕнчипе хуçаланнă çĕршывсен çар эшкерĕсем те нихăш еннелле те çул хывман, вĕсем пачах урăх вырăнсемпе, аякран-аякран иртсе çӳренĕ. Çавăн пирки ĕнтĕ хальхи тĕпчевçĕсем Иртыш шывĕ таврашĕнчи çеçенхирсем тăрăх Алтайран Вăта Урал патнелле куçса пыракан чăвашсем çинчен авалхи паллă историксем мĕн çырса хăварнă-ши тесе шырама тăрăшни йăлтах пĕр усăсăр ĕç. Эппин, çак тури чăвашсен ушкăнĕн пурнăçне пачах урăх паллăсемпе усă курса тĕпчеме тивет. Тĕпчевçĕсемшĕн çак паллăсемпе пулăмсем кашни – чи хаклă ахахмерчен. Анчах та вĕсем ĕмĕрсем иртнĕ хушăра истори анлăхĕнче йăлтах сапаланса çухалса пĕтнĕ. Вĕсене пĕрчĕн-пĕрчĕн шыраса тупса, ăнланса тата йĕркелесе паха шăрçа ярăмĕ тăвасси – тури чăвашсен историне тĕпчекенсемшĕн темрен те пархатарлă ĕç.

Алтайран çурçĕрелле кайнă чăвашсем ерипен Вăта Урал (Урал – тюркла **чул пиçиххи**) патнелле куçса пынă. Çак тапхăрта пĕртте çăмăл пулман çула тухнă чăвашсен пурнăçĕ. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетсе пурăнакан халăхшăн пиншер пуçлă пысăк кĕтӳсене çӳретме юрăхлă вырăнсем шыраса вĕçĕмсĕр вырăнтан-вырăна куçасси, çулта-йĕрте тĕл пулакан ют халăхсемпе килĕштерсе пурăнасси, хăйсене тапăнакан тискер тăшмансене çĕнтерсе сывă юласси ялан вĕсен чун-чĕрине хускатнă. Ку чăрмавсемпе пĕрлех çанталăк пăсăк тăнă вăхăтсем те нумай кансĕрленĕ. Йĕпе-сапине те, асар-писер çил-тăвăлĕсене те, шартлама сивĕсемпе типĕтсе çунтаракан шăрăхсене те, нимĕн кĕтмен çĕртен таçтан сиксе тухса тапăрĕ-тапăрĕпе çынсене леш тĕнчне илсе каякан хăрушă чир-чĕрсене те нумай тӳссе ирттернĕ вĕсем хăйсен канăççăр

кунҫулӗнче. Уйрӑмах вӑкӑрсем туртса пыракан кӳмесенче вӑхӑта ирттерекен ватӑсемпе пӗчӗк ачасене тата сусӑрланнисене йывӑр пулнӑ. Апла пулин те шӑпах ҫак йывӑрлӑхсене тӳссе ирттернипе куҫса ҫӳрекен чӑвашсен хӑйне евӗр хавалӗ йӗркеленсе туптаннӑ, чӑтӑмлӑхӗ ӳснӗ, ӳт-пӗвӗ тӗрекленнӗ, хастарлӑхӗпе вӑй-халӗ ҫирӗпленнӗ, ӑсӗ-тӑнӗ ҫивӗчленнӗ.

Пӗр 160 ҫул тӗлнелле Иртыш шывӗ тӑрӑх ҫурҫӗрелле куҫса пыракан чӑвашсем Тобол шывӗн вӑррине пырса ҫитнӗ. Ҫынсене кунти вырӑн кӑмӑла кайнӑ та урӑх малалла кайма шутламан вӗсем. Чӑвашсемпе юнашарах, вӗсенчен кӑнтӑр еннелле, Алтайран куҫса килнӗ венгрсем вырнаҫнӑ пулнӑ.

Ҫапла, пулас тури чӑвашсем Иртышпа Тобол шывӗсем пӗрлешнӗ вырӑн таврашӗнче пурӑнма тытӑннӑ. Ҫакна X1X ӗмӗрте археологсем тӗпчесе тупнӑ япаласем те ҫирӗплетсе кӑтартаҫҫӗ. Тобол шывӗ Иртышпа пӗрлешнӗ вырӑнти пӗр лаптӑк сӗм авалтанпах **Чӑваш сӑмсахӗ** ятпа паллӑ. (8).

Ҫак Чӑваш сӑмсахӗ ҫинчи чи ҫӳллӗ вырӑна **Чӑваш тӑвӗ** теҫҫӗ. Шӑпах ҫак Чӑваш тӑвӗ ҫинче Ҫӗпӗр ханӗ Кучум 1581 ҫултхи октябрӗн 23–мӗшӗнче Пермь ҫӗрӗсем ҫинче хуҫала-накан Яковпа Григорий Строгановсем хушнипе Раҫҫей ҫумне Ҫӗпӗре пӗрлештерме тапӑнса килнӗ Тимофей Ермак утаманӑн ҫарне ҫӗнме пулӑшма турра тархаслаcа тӑнӑ. (9; 10).

X111 ӗмӗр пуҫламӑшӗнче монголсем Ҫӗпӗрӗн хӗвел-анӑҫӗнчи ҫӗрӗсене йышӑнсан, Чингисхан кунта Тюмень ханствине тунӑ, хан пулма Тайбугана лартнӑ. Раҫҫейре III Йӑван патшара ларнӑ вӑхӑтра (1462–1505 ҫулсенче) Бухараран тухнӑ Ибек хан ҫарӗ Ишим тӑрӑх куҫса ҫӳреме тытӑннӑ та кӗҫех Тюмень ханствине ярса илнӗ. Хӑй вӑл Тайбуга хан Тура шывӗ хӗррине туса лартнӑ Чинги-Тура (1585 ҫултанпа Тюмень крепоҫӗ – **тӳмень** тесе 10 пин ҫынлӑ ҫарӑн ертӳҫине калаҫҫӗ) хулинче пурӑннӑ, Тобол тӑрӑхӗнчи халӑхсене пӑхӑнтарса, Тюмень ханствине аслӑллатса пынӑ. 1495 ҫулта вырӑнти тутарсен княҫӗ Махмет ҫак Ибек хана вӗлернӗ те Тоболпа Вӑта Иртыш тӑрӑхӗнче Ҫӗпӗр ханствине туса хунӑ. Ялан пурӑнма Чӑваш сӑмсахӗнче ларакан Искер хулине вырнаҫнӑ (вырӑссем ку хулана Ҫӗпӗр тенӗ).

Чӑваш халӑх ҫыруҫи М.Н. Ильин (Юхма Мишши) Чӑваш тӑвӗн ячӗ мӗнле пулнине ҫапла ӑнлантарать. Тобол шывӗ Иртыша юхса кӗнӗ

вырăнтан пĕр-ик çухрăм çӳлерех вырнаçнă сăмсаха таврари халăх Чăваш сăмсахĕ тет. Чăваш тăвĕ тесе çак сăмсах çинчи çӳллĕ сăрта калаççĕ. Çакăнта тахçан-авал, Ермак киличченех, суту-илӳ тума çӳрекен чăвашсен пĕчĕк хула пулнă. Кучум хан пĕррехинче çав хулара питĕ хитре чăваш хĕрне курнă та хăйĕн гаремĕ валли чăвашсен хитре хĕрĕсене тытса илсе пыма хушнă. Çав хĕрсем çакăнпа килĕшмен, пурте çӳллĕ çырантан Иртыш шывне сиксе вилнĕ. (21).

Пирĕн шутпа, Юхма Мишши çапла илемлĕ сăнарласа каласа ĕнентерме тăрăшнине историри витĕмлĕ чăнлăх тесе йышăнма çук. Пĕр енчен шутласан, Кучум – узбексен ханĕн Муртазан ывăлĕ –- Çĕпĕр ханствинче 1563 çулта тин хуçа-ланма тытăннă: кунта ханра ларакан пиччĕшĕпе шăллĕне Едигерпа Бекбулата вĕлернĕ те Искер хулине йышăннă, таврара пурăнакан тутарсенчен, остяксенчен (хантысенчен), вогулсенчен (мансисенчен), пушкăртсенчен ясак пуçтарма тытăннă, хăй кашни çул вырăссен патшине Хаяр Йăвана кирлĕ таран парăм тӳленĕ. Тепĕр енчен каласан, Хаяр Йăван виличчен унăн çирĕп аллине лекнĕ чăвашсем Урал тăрăхне килсе çӳреме пултарайнăши? Çук пуль, курайман чăваш сутуçисене Кучум хан хăйĕн таврашĕнче. Юхма Мишши каларăшле, чăваш сутуçисем Кучум ханра ларнă çулсенче инçетри Тобол шывĕн вăрринче хăйсен ятне хула туса унта хăшĕсем çемйисепе пурăннă пулсан, вĕсем Кама вăрринчен питĕ инçетри вогулсемпе остяксем патне тăтăшах çӳренĕ пулать. Эппин, вĕсене çак пин çухрăм ытла тăсăлакан вăрăм çула çӳреме ку тăрăхра вăхăт-вăхăт пурăнмалли тата урăх хуласем те кирлĕ пулнă. Анчах ăçта вырнаçнă-ха тата пулнă-и вĕсем? Кунашкал хуласем историре паллă мар.

1581 çулта Василий Тимофеевич Ермак ертсе пыракан вырăссен çарĕ Искер хулине çĕнсе илет. Çавăнтанпа Çĕпĕр ханствин çĕрĕсем Раççей патшалăхне кĕреççĕ. (9).

Х1Х ĕмĕрте археологсем тĕпчесе пĕлнĕ тăрăх, Искерте Кучумăн вăйлă çарĕ тăнă. Çак çар çыннисене лайăх хĕçпă-шаллантарнă пулнă: тимĕр ункăсенчен çыхса тунă кĕпесем (кольчуга), сăнăсем, хĕçсем, ухăсем, тăшманран хӳтĕленме тата ăна пĕтерме кирлĕ ытти хатĕрсем те пулнă вĕсен. Кунтах пысăк кăвайтсем хунă вырăнсем нумай упранса юлнă. Лашасен, пăлансен, тĕрлĕрен кайăксен, пулăсен шăммисем сапаланса выртнă. Тăм чӳлмексен ванчăкĕсем ăçта пăхнă унта темĕн

чухлех пулнӑ. Тимӗр ҫӗҫӗсем, шӑмӑран тунӑ кашӑксем, пӑрасем, шӑмӑран ӑсталанӑ тимӗр вӗҫлӗ ухӑ йӗпписем, шӑмӑ пуртӑсем, сунарта кайӑксене астармалли шӑхличсем тупнӑ. Ҫирӗплетнӗ хулапа юнашар ҫарта тӑман ытти ҫынсем пурӑннӑ пулас. Ҫав вырӑнсенче тетелсем ҫумне ҫакмалли чул хатӗрсем, пулӑ тасатмалли шӑмӑ ҫӗҫӗсем тупнӑ. Археолог каланӑ тӑрӑх, ҫак япаласенчен нумайӑшӗ Чӑваш тӑвӗн тӗпекне ҫӗршер ҫулсем хушшинче ҫуркаласа пӗтернӗ тарӑн ҫырмасен хысакӗсенче ҫиелтех курӑнса йӑваланса выртнӑ. (8).

Знаменский М.С. археолог куҫӗ тӗлне пулнӑ авалхи япаласем акӑ мӗнле шухӑшлаттараҫҫӗ: ахӑртнех, вӗсенчен хӑшӗ-пӗрисем кунта 200-мӗш ҫулсем тӗлнелле пурӑннӑ тури чӑвашсем хыҫҫӑн юлнӑскерсем пулма пултараҫӗ-ҫке!

Эппин, пулнӑ авал кунта чӑвашсем! Тулли пурнӑҫпа пурӑннӑ вӗсем Иртышпа Тобол шывӗсем пӗрлешнӗ тӑрӑхра!

Вунсакӑр ӗмӗр каялла ҫӗнӗ вырӑнта пирӗн ват асаттесем мӗнлерех пурӑнма пултарнине паянхи хамӑр ӑс-тӑнпа шухӑшласа, куҫпа пӑхса ӑнланма тӑрӑшӑпӑр.

Икӗ аслӑ шыв – пӗри Алтай ҫӗрӗсенчен пуҫланса икӗ пин ҫухрӑма яхӑн ҫурҫӗрелле юхса килнӗ мӑнаҫлӑ Иртыш, тепри Вӑта Уралӑн хӗвелтухӑҫ енчи Исеть, Тура, Тавда тата вӗсен шутласа вӗҫне тухма ҫук юппisен шывӗсемпе тулнӑ Тобол пӗрлешнӗ вырӑн. Тавралла – тинӗс евӗр вӗҫӗ-хӗррисӗр симӗс тайга, шурлӑхсем, лачакасем. Вӑрман варринче те, Иртышпа Тобол ҫыранӗсем хӗрринче те вырӑн-вырӑнӑн уҫӑ лаптӑксем. Ку лаптӑксенче аякран куҫса килнӗ чӑвашсем кашни хӑйӗн йӑх таврашӗпе пуҫтарӑнса кил-ҫурт ҫавӑрнӑ. Палӑ, Алтай ҫӗрӗсем ҫинче чӑвашсем, хӑйсен кӗтӗвӗсене хӑваласа, хӗлӗн-ҫӑвӗн вырӑнтан-вырӑна куҫса ҫӳренӗ, тирпе тата пысӑк кӗҫҫесемпе витнӗ ҫӑмӑллӑнах сӳтсе пуҫтарса тепӗр вырӑнта ҫӗнӗрен лартмалли юртӑсенче /ҫуртсенче/ пурӑннӑ. Анчах хаяр ҫанталӑклӑ тайгара юртӑсенче пурӑнма ҫӑмӑл мар. Ҫӗр чавса е йывӑҫран майлаштарса купаланӑ хӗлле-ҫулла пурӑнмалли пӳртсем тума вӗренме тивнӗ чӑвашсене. Паллӑ, тӗрлӗрен хуралтӑсем те пулнӑ вӗсен, хуралтӑсемсӗр мӗнле май килтӗр пурнӑҫра? Тавралла пурнӑҫ вӗрет: улӑхсенче йышлӑ выльӑх кӗтӗвӗсем ҫӳреҫҫӗ, шыв тӑрӑх пулла е сунара тухнӑ ҫынсен кимисем курӑнаҫҫӗ, кашни кил-ҫурт таврашӗнче ҫитӗннисем хӑйсен куленхи ӗҫӗсемпе апа-

ланаççĕ, ача-пăча шавлăн вылять. Кусем – пулас тури чăвашсен ялĕсем!

Чăвашсене Алтайран ертсе килнĕ аслă улпут хăй ятне уйрăм тĕреклĕ кил-çурт çавăрнă. Тобол вăрринчен инçех мар тăвалла, Иртыш шывĕн сылтăм çыранĕнчи пĕр сăмсах çинче, унăн тăшмансенчен хӳтĕленмелли çирĕплетнĕ вырăнĕ пулнă. Кунта улпутăн тарçисем, улпута сыхлакансем, çар çыннисем тата вĕсен килйышĕсем йышлăн пурăннă. Таврари мĕнпур халăхсем чăвашсен аслă улпутĕнчен хăранă, ăна пăхăннă, чысланă. Ахальтен мар çак лаптăк сĕм авалтанпа хальхи вăхăта çитиех **Чăваш сăмсахĕ** ятпа паллă.

Çапла пурăннă чăвашсем Тобол шывĕн вăрри таврашĕнче. Вĕсем хăйсене тапăнакан тăшмансене хĕсĕрлеме паман, пурте харăссăн тăрса хăюллăн хӳтĕленнĕ. Ача-пăча йышлă ӳстернĕ. Хĕлĕн-çăвĕн кулленхи ытти ĕç-пуçа тивĕçлипе туса пырса, ĕçсем ăнăçуллă пулса пынă чухне ушкăнпа савăнса ирттернĕ пушă вăхăта.

Иртнĕ ĕмĕрти 20-мĕш çулсенчи чăвашсен культурăпа ăслăлăхăн паллă ĕçченĕ Тенехпи Петĕр Михалкки*) (Михаил Петрович Петров) чăваш халăхĕн историне тимлĕн тĕпченĕ, вăл хăйĕн ĕçне пĕтĕмлетсе кĕнеке те пичетленĕ. Унăн шучĕпе, авалхи чăвашсем ытти хуннсем пекех кĕтӳçсем пулнă, кайăка çӳренĕ. «Çакна пурне те Иртыш таврашĕнче тупнă чăн авалхи япаласем лайăх кăтартаççĕ. Вĕсем халĕ Ленинградри Эрмитаж ятлă музейре тăраççĕ». (12).

Тенехпи чăвашсен историйĕ çинчен тепĕр кĕнеке те хатĕрленĕ. (Унăн алçырăвĕ Чăваш патшалăх гуманитари ăсхлăлăхĕсен институчĕн архивĕнче упранать – II уйрăм, 2336 усрав ед., 8816 № инв.). Кĕнекери «Атăлçи пăлхарсен çĕр ĕçĕ» уйрăмĕнче вăл çапла çырнă: «Пăлхарсем Х-мĕш ĕмĕрте мар, унтан чылай малтан примитивлă çĕр ĕçне пăрахса, ака-сухапа çĕр ĕçлеме тытăннă. Ăна мадьяр чĕлхине кĕрсе юлнă çĕр ĕç терминĕсем, сăмахсем ăнлантараççĕ».

*) М.П. Петров – Тенехпи (1877–1938) шучĕпе чăваш ăрăвĕсем пĕрпĕринчен 2200 çула яхăн ĕлĕк уйрăлса кайнă. Эппин, çĕнĕ эрăчченхи 165 çулта Модэ ханăн ывăлĕ Лаошань Алтайран Турфан оазисне куçарса янă савирсем анатри чăвашсем шутланаççĕ.

«Ку авалхи сăмахсем мадьяр чĕлхине хăш вăхăтра кĕрсе çирĕпленсе юлма пултарнă-ши? Мадьярсем, авалхи пăлхарсемпе

юнашар пурăннăскерсем, Атăл таврашĕнчен VIII-мĕш ĕмĕрте куçса кайнă. Апла пулсан, чăвашла çĕр ĕç терминĕсем (сăмахсем) вĕсен чĕлхине çав VIII-мĕш ĕмĕрчченех малтан кĕме çеç пултарнă. Ютран килсе кĕнĕ сăмаха сарăлса çирĕпленсе çит-мешкĕн авал нумай вăхăт кирлĕ пулнă. Çавăнпа чăваш сăмахĕсем мадьяр чĕлхине VIII-мĕш ĕмĕрччен пĕр 200-300 çул малтан кĕнĕ пуль тетĕп эпĕ». (33).

Чăвашсен паллă историкĕ тата археологĕ Василий Филиппович Каховский профессор чăваш халăхĕн историне питĕ тарăн тĕпченĕ. Çапла пулин те, истори наукисен докторĕ ятне илме тăратнă «Происхождение чувашского народа» ятлă хăйĕн ĕçĕнче вăл, тĕпрен илсен, анатри чăвашсен историне кăна çутатса парать (6). Çав хушăрах пулас тури чăвашсем çĕнĕ эра пуçламăшăнче венгерсемпе мĕнлерех çывăх хутшăнса пурăнни çинчен вăл мĕнле калани те паллă. Акă çапла çырнă В.Ф. Каховский хăйĕн «К истории чувашско-венгерских этнокультурных связей. (На материалах фольклора и ономастики)» ятлă ĕçĕнче: «Чăвашсемпе венгрсен улăпла юмахĕсене танлаштарупа типологилле анализ туни вĕсем авалхи сюжечĕсем енчен пĕтĕмпех пĕр евĕрлĕ е питĕ çывăх пулнине кăтартать». «Пушкăртсемпе венгрсен юмахĕсенчи хăшпĕр сюжетсен, сăнарсен тата сăлтавсен пĕр-пеклĕхĕ мĕнрен килнине Д.Г. Киекбаев "хальхи венгрсем тахçан авал, пирĕн эра пуçламăшĕнче, Уралта Камăпа Белая юханшывсен улăхĕсенче пурăннă. Çав тахçанхи вăхăтсенче венгрсем авалхи пушкăртсемпе, çармăс, удмурт йăхĕсемпе тачă хутшăннă", тесе палăртнă, эпир вара хушса, çавăн пекех чăваш халăхĕн ватă аслашшĕсемпе – авалхи пăлхарсемпе те, тесе калăпăр» (40). Çак тĕслĕхре В.Ф. Каховский тури чăвашсене пĕр сăмахпа та асăнмасть, анчах та кунта вăл, Д.Г. Киекбаевпа килĕшсе, Урал тăрăхĕнче пирĕн эра пуçламăшĕнче венгрсемпе авалхи пăлхарсем чăвашсен ватă аслашĕсемпе хутшăнса пурăннă, тени – пирĕншĕн чи хакли.

Тури чăвашсем Атăлçи пăлхар патшалăхне 1236 çулта Бату çарĕсем аркатнă хыççăн кăна пуçланса кайнă тесе шутлакансене кунта тимлесех асăрхаттаратпăр: *Çурçĕр Кавказран сăварсем (чăвашсем) Вăта Атăл тăрăхне 730 çулсенче куçса килнĕ те Анат Камăн сулахай енче пурăнакан пăлхарсенчен кăнтăрарах, Пысăк Çармăсанпа Вăтăк шывĕсен таврашне, вырнаçнă. Çавăнпа пулас анатри чăвашсем пирĕн эра пуçламăшĕнче Урал тăрăхĕнче венгрсепе тачă хутшăнса пурăнма*

*пултарайман. Вĕсен хушшинчи хутшăнусем чылай кайрантарах, çак вырăнах (Пысăк Çармăсанпа Кинель шывĕ-сен тăрăхне) пулас анатри чăвашсемпе пĕр вăхăталла Кăнтăр Урал енчен килнĕ венгрсем анăçалла куçса кайиччен пурăннă кĕске тапхăрта кăна пулма пултарнă.*

В.Ф. Каховский профессорăн асăннă ĕçĕнчи (40) тепĕр тĕслĕхе илсе кăтăтатпăр. «Род "кесе" (khase) встречается и в перечне венгерского племенного объединения в Левадии. С этнонимом **кесе** ассоциируются топонимы с корнем "касы", широко распространенные в Чувашии. Н.И. Ашмарин определяет этимологию "кассы" – как "улица", "околоток", "деревня". В этом значении этот термин встречается в настоящее время в Венгрии. Топонимы "касси" распростарнены в северных и центральных районах Чувашии».

Чăваш Республикин карти çинче "касси" сăмах кĕрекен чăвашла ял ячĕсене 560 ытла тупма пулать. Анчах вĕсем кăнтăрти районсен территорийĕсем çинче çукпа пĕрех. Нумайăшĕ Муркаш, Шупашкар районĕсен çĕрĕсем çине вырнаçнă – кашни районĕнче утмăлтан ытларах, Çĕрпӳ районĕнче кунашкал ятсем хĕрĕхе яхăн пур, Вăрнар, Етĕрне, Красноармейски, Элĕк районĕсенче – вăтамран çирĕмшер ят, Канаш, Хĕрлĕ Чутай, Сĕнтĕрвăрри районĕсенче – вуншар ята çывăх. Калас пулать, чăвашла ячĕсенче "касси" сăмах пур ялсене нумайăшне халĕ вырăсла пачах урăхла калаççĕ. Темиçе тĕслĕх кăна илсе кăтартатпăр. Сăмахран, Мăн Енĕш шывĕн тури пайĕнчи çĕрсем çинче вырнаçнă Хуракасси ялĕ вырăсла Эльбарусово ятлă, Энĕшкасси ялĕ – Тиньговатово, Чечейкасси Туçа ялĕ – Первые Тойси, Кивĕ Тутайкасси ялĕ – Старое Акташево. Тутайкасси ялĕнче Хусан ханстви вăхăтĕнче тутар салтакĕсем пурăнма пултарнă. /Тутарла сăмахсем АК – «шурă», ТАШ – «чул» пĕлтерĕшлĕ/. Хальхи Красноармейски районĕнчи Тусай /Досаево/ ялне 1671 çулта Разин Çтапанĕн пăлхавне хутшăннă чăвашсене тустарса çӳренĕ Матвей Кравков полковник тăратнă рапортсенче Досакасы тесе палăртнă. /29/. Иккĕленмелли çук, ку ялсене тури чăваш çыннисем сĕм авал никĕсленĕ пулнă, вĕсен ячĕсене Хусан ханствине Раççейпе пĕрлештернĕ хыççăн е кайрантарах вырăсла улăштарса çырма тытăннă.

Хальхи Чăваш Енĕн çурçĕр районĕсенче "касси" сăмахпа вĕçленекен ялсем çав тери нумай пулни тата çав вăхăтрах авалтанпа анатри чăвашсем пурăнакан кăнтăр енчи вырăнсенчи ялсен ячĕсенче ку сăмах

тĕл пулманни пĕр сăлтавсăр мар ĕнтĕ. "Касси" сăмах чăвашсен чĕлхине венгрсен чĕлхинчен кĕнĕ пулсан, çак икĕ халăхăн пĕр-пĕринпе чылай вăхăт хушши хутшăнса пурăнмалла пулнă. Шăпах тури чăвашсем венгрсемпе Урал тăрăхĕнче çĕр çул хушши ытларах тата кайран хăйсем Уралтан куçса кайсан та хутшăнса пурăннă. Анатри чăвашсем вара венгрсемпе çакăн евĕрлех нумай вăхăт хутшăнса пурăнма пултарайман, мĕншĕн тесен 730-мĕш çулсенче анатри чăвашсем Çурçĕр Кавказран Вăта Атăл тăрăхне килсе çитнĕ кăна, венгрсем вара шăп та шай çак тапхăрта хăйсен Вăта Атăл çинчи çĕршывĕнчен Дунай еннелле куçма çула тухнă.

Чăвашсем çĕнĕ эра пуçламăшĕнче Иртышпа Обь шывĕ-сем пĕрлешнĕ вырăнта пулни çинчен паллă историксем Виталий Петрович Иванов, Василий Васильевич Николаев, Василий Дмитриевич Дмитриев татăклăн калаççĕ. «Çĕнĕ эрăри I-мĕш ĕмĕрĕн пуçламăшĕнче чăвашсен авалхи мăн аслашшĕсем – огурсен (пăлхарсен) тата сапирсен (суварсен) йăхĕсем – ытти тĕрĕксенчен уйăрăлса кайнă та, çурçĕрти иран йăхĕсен çĕрĕсем урлă кăнтăртан çурçĕрелле (çуркунне) тата çурçĕртен кăнтăралла (кĕркунне) кукăр-макăр çӳресе, анăçри гуннсенчен уйрăммăн анăçалла куçса пынă. Вĕсем çапла куçни икçĕр çула яхăн тăсăлма пултарнă. Оногурсемпе сапирсен хĕллехи кĕтӳлĕхĕсем Çичĕ шыв тăрăхĕнче пулнă, çуллахисем – Хĕвеланăç Çĕпĕрте, Иртышпа Обь шывĕсем пĕрлешнĕ вырăнта. Унта вăл вăхăтра угрсен йăхĕсем пурăннă – хантысен, мансисен тата венгрсен пĕрлехи мăн аслаш-шĕсем. Çичĕ шыв (Семиречье) тăрăхĕ тесе Балхаш кӳллин-чен кăнтăралла вырнаçнă çĕрсене калаççĕ, унта çичĕ шыв юхаççĕ – Или, Каратал, Биен, Аксу, Лепса, Баскан, Сарканд. ...III-мĕш ĕмĕрте оногур–пăлхарсем Сырдарья шывĕ тăрăх анăçалла, Арал тинĕсĕ таврашнелле куçнă, Вăта Азипе Казахстан çеçенхирĕсем тăрăх куçса çӳренĕ». (13).

Çак сумлă ăсчахсем каланинче акă мĕн тĕлĕнтерет: мĕнле нуша е ăнланма çук мĕнлерех ăс-тăн хистенĕ-ши оногур–пăлхарсене икçĕр çул хушши кашни çуркуннепе кĕркунне, çурçĕр иран халăхĕсем çултайĕрте чăрмантарнине сире-сире, Казахстанри сăрт-тӳпемсем çинчи выльăхсене çитерме юрăхлă çеремлĕ çеçенхирсем урлă тата Çĕпĕрти вăрманлă-шурлăхлă вырăнсемпе пин çурă çухрăм ытла тăсăлакан çулпа хăйсен пиншер пуçлă кĕтĕвĕсене каллĕ-маллĕ хăваласа çӳреме.

Кĕтӳсем хыççăн уйăхĕ-уйăхĕпе пĕр чарăнмасăр вырăнтан-вырăна куçса çӳресси вăл утлă çарпа тăшман çине вирхĕнсе тапăнса кĕресси мар вĕт. Выльăх кĕтĕвĕсем хыççăн çак çынсен тапăрĕсем те çӳренĕ-çке. Тапăр кашни талăкра вăтамран вунă-вунпилĕк çухрăм малалла куçнă пулсан та, сахалтан та çур çул кирлĕ пулнă çак йывăр çула пĕр майлă кăна иртсе тухма. Апла пулсан мĕн тума каймалла кашни çул пĕтĕм халăхăн Çичĕ шыв тăрăхĕнчен пуçласа Иртышпа Обь шывĕсем пĕрлешнĕ вырăна çитиччен? Çу каçиччен этем пурнăçĕнче темĕн те пĕр пулса иртет – асар-писер çил-тăвăлĕ те, шалкам çумăрĕ те, тапăрта ача-пăчапа ваттисем чирлесси те тата тĕрлĕрен ытти пăтăрмахсем те. Эппин, куçайман малалла чăвашсен тапăрĕ кашни кун çакнашкал хăвăртлăхпа, тепĕр чухне эрни-эрнипе пĕр вырăнта чарăнса тăма та тивнĕ пулĕ.

Ахăртнех, ĕçсем вăл вăхăтра пачах урăхла пулнă**:** Иртышпа Тобол пĕрлешнĕ вырăнта авалхи чăвашсем (пулас тури чăвашсем) хăйсем тĕллĕн пурăннă, вĕсенчен уйрăммăн Балхаш кӳлли çывăхĕпе, Сырдарья шывĕ тăрăх Арал тинĕсĕ еннелле пăлхарсен ытти йăхĕсемпе пĕрле чăвашсен тепĕр пысăк ушкăнĕ (пулас анатри чăвашсем) куçса пынă. (Тен, çапла та пулма пултарнă: Çичĕ шыв тăрăхĕпе куçса пыракан анатри чăвашсен пĕр ушкăнĕ темлерен ыттисенчен татăлса юлнă та Тобол шывĕн вăрри еннелле куçса кайнă).

Анчах, темĕнле каласан та, пирĕн шутпа, шăп тĕрĕсси çапла: Тобол таврашĕнче пурăннă чăвашсем ытти чăвашсенчен 155 çул тĕлнелле уйрăлса кайнă та пурăна киле тури чăвашсене пуçарса яракансем пулса тăнă.

Историк Гумилев Л.Н. шучĕпе, хуннсем Каспи тинĕсĕ çывăхне Алтайран тухсан виçĕ çул хушшинче çитнĕ (4).

Тата акă мĕне асра тытмалла: венгрсен Модэ ятлă ханĕ çĕнĕ эрăчченхи 174 çулта вилнĕ хыççăн Аслă Хунгари имперétин ханĕ пулма ларнă унăн ывăлĕ Лаошань хăйне пăхăнасшăн пулман Алтайри савирсен (чăвашсен) пĕр пайне 165 çулта Турфан оазисне куçарнă. Тата, Гумилев каланă тăрăх, çĕнĕ эрăри 156 çулта Таншихай ертсе пынипе сяньби çыннисен çарĕ «хуннсен пĕр пайне Монголи çĕрĕнчен Атăл çыранĕсем патнелле, тепĕр пайне Çичĕ шыв тăрăхне хăваласа янă» (31). Пирĕн шутпа, Çичĕ шыв тăрăхне куçса кайнă хунннсем шутĕнче




Переселение суваров из Азии в Европу (по Антею Илитверу /5/)

шăпах авалхи анатри чăвашсем пулнă. Çак хуннсем «...Атăлпа Урал (Ейĕк) шывĕсем хушшинче пурăнма вырнаçнă та 370 çулччен алансемпе вăрçса пурăннă.

Хуннсен пысăках мар ушкăнĕ çакăнта 200 çул хушшинче укăрсемпе хутшăнса метисациленнĕ...» (31).

Мĕн вăхăт хушши пурăннă çурçĕрелле кайнă пулас тури чăвашсен ушкăнĕ Иртышпа Тобол таврашĕнче венгрсемпе, остяксемпе тата манси халăхĕсемпе кӳршĕллĕ. Кун пирки татăклăн калама çук. Миçе пин çын пулнă вĕсен йышĕнче. Мĕн анлăш çĕр лаптăкĕнче хуçаланнă вĕсем. Куна та никам та татса калаймĕ. Халĕ кашни хăй ăнланнă пек кăна шухăшлама пултарать.

Çакнашкал шухăш уçăмлăрах та татăклăрах пултăр тесе пĕр тĕслĕх илер-ха. Акă, 1722 çулта Аслă Петĕр патша хушнипе иртгернĕ ревизи тăрăх, Тăрăн вулăсĕнче виçĕ пин арçын пурăннă. Вăл вăхăтра ку вулăс Шупашкар уесĕнчи тăхăр вулăсран чи пысăкки шутланнă. Унăн çĕрĕсем Атăлтан пуçласа Сăр вăрманĕсем таран çирĕм пилĕк çухрăма яхăн анлăш лаптăк çинче тăсăлнă. Шупашкар уесĕнче (хулипе пĕрле) вунтăвалтă пин те тăхăрçĕр арçынна шута илнĕ. Хĕрарăмсене те шута кĕртес пулсан, уесри халăх йышĕ пĕр вăтăр пине çитмелле. Апла эппин, Иртыш тăрăхĕне Алтайран куçса пынă чăвашсен ушкăнĕнче сахалтан та вунă пин çын пулма пултарнă, тепĕр икçĕр çултан вĕсен йышĕ вăтăр пинрен кая мар пулнă тесен, пысăк йăнăшах пулас çук.

Иртышпа Тобол тăрăхĕнчи çанталăк питех килĕшмен пулас кунта пурăнакан чăвашсене. Çĕр чăмăрĕн историнче II-III ĕмĕрсенче Атлантика океанĕнчен вĕрекен çилсем хальхи тайга тăрăхне питĕ нумай нӳрĕк илсе килсе тăнăран, шăпах çак вырăнсенче çав тери йĕпесапаллă çанталăк тăнă. Кунта лăсăллă йывăçсем ӳсекен иртсе çӳреме çук чăтлăх йăлăм вăрманĕ те вĕçĕ-хĕррисĕр шурлăхра сарăлса выртнă, шартлама сивĕ хĕл кунĕсенче таврана тарăн юр кĕрчĕсем хупланă, çулла куçа уçма çук пĕлĕт евĕр явăнакан ӳпре-пăван чуна илнĕ. Вăрманлă-шурлăхлă çарансем те пиншер пуçлă пысăк кĕтӳсене çӳретме пĕртте илĕртмен куçса çӳресе пурăнма хăнăхнă чăвашсене. Выльăхчĕрлĕх ĕрчетсе пурăнма йывăр кун пек вырăнта. Лашасемпе ĕнесене, тĕвесемпе ашаксене, сурăх-качакасене усрама хулăн юр айне пулакан шурлăхлă улăхсенчи тачка курăк мар, хĕлле те выльăхсем урисемпе çӳхе юра чавса çиме пултаракан пысăк тутлăхлă çеçенхир курăкĕ

кирлӗ. Сунар кайăк-кӗшӗкӗсене тата пулă тытса тăранса пурăнакан халăхсене кăна ырлăх пулнă кунта. Тен, кӳршӗллӗ халăхсем те хӗсӗрленӗ чăвашсене. Авал тăшмансем хăйсем тапăнса кӗнӗ халăхсен кӗтӗвӗсенчи лашисемпе ӗнисене вăрланă, ытти пурлăха çаратнă, нумай çамрăксене чуралăха хăваласа кайнă. Çавăнпа та урăх вырăн шырамалла, пурăнма тепӗр çӗре куçмалла пулнă тури чăвашсен.

Пӗр икçӗр çула яхăн хаяр çанталăка тӳскелесе пурăннă та чăвашсем Тобол вăрри таврашӗнче, вара тимлесех пурăнмалли çӗнӗ вырăн шырама тытăннă.

Ятарласа уйăрнă çынсем инçетри тавралăхсене тӗпчесе çӳресе тавăрăннă хыççăн каласа панă тăрăх, кай енче пурăнма юрăхлă питӗ чаплă вырăн тупнă вӗсем. Инçех мар вăл, çул-йӗре никам та пӳлмесен, пӗр çу каçиччен куçса çитме пулать унта. Çак вырăн икӗ пысăк юханшыв пӗрлешнӗ çӗрте сарăлса выртать. Унта вăрманӗ те пач урăхла – сарлака çулçăллă тӗрлӗрен капмар йывăççем, çиме тутлă мăйăр тата тӗрлӗ-тӗрлӗ çырла тӗммисем лаптăкӗ-лаптăкӗпе ӳсеççӗ. Сунара çӳреме питӗ паха тирлӗ сăсарсем, хăнтăрсем, ăтăрсем, кăшсем, тилӗсем, пурăшсем, çиме лайăх ашлă упасем, пăлансем, пăшисем, хир качакисемпе хир сыснисем туллиех вăрман таврашӗнче. Çак аслă хура вăрмансенчи вайă йывăççен хăвăлӗсенче тутлă пыл пухакан хуртсем пурăнаççӗ. Çырмасемпе кӳлӗсенче темӗн тӗрлӗ пулăсем хӗвӗшеççӗ, чарлансем, акăшсем пур, кайăк кăвакалӗсем калама çук нумай. Вӗçӗхӗррисӗр таса çарансем çинче тутлăхлă курăксем ут хырăмне перӗнесле парка ӳсеççӗ. Çав тăрăхри кӗтӳлӗхсенче выльăхсем хӗлле те выçăпа вилес çук. Пурăн та пурăн савăнса, ырă курса, чăрмантаракансем тупăнмӗç. Темӗнле ăнланмалла мар чӗлхепе калаçакан халăх пурăнатьха унта, анчах çак вăрман çыннисене тепӗр чухне талăкӗ-талăкӗпе кайсан та тӗл пулаймастăн, питӗ сахаллăн вӗсем тата кирлӗ-кирлӗмаршăн тапăçса вăрçма хастар çынсем мар.

Хăйсене килӗшӳллӗ çӗнӗ вырăн тупăннăшăн питӗ савăннă тури чăвашсем, вăрах тытăнса тăмасăр унта куçса кайма йышăннă.

✵ ❧ ✵ ☙ ✵

# Тури тата анатри чăвашсем
## Вăта Атăлпа Анат Кама тăрăхĕнче

**П**улас тури чăвашсем Вăта Уралтан Вăта Атăлпа Анат Кама тăрăхне пĕр 200 çулсен вĕçнелле е кăшт кайрантарах куçса килме пултарнă.

Ăнланмалла, куçса килнĕ халăх çĕнĕ çĕрте хăйсене ялан пурăнма юрăхлă вырăн шырама тытăннă. Хăшĕсем Илеть тата Кăкшака шывĕсем тăрăхĕнче чарăннă, теприсем кунтан та малалла, Атăл урлă каçса Çавалпа Енĕш шывĕсем тăрăхне çитиех кайнă.

Мĕн курма пултарнă-ха Атăл урлă каçнă чăвашсем хăйсем таврала?

Ăçта пăхан унта – вăрман! Тĕпексем, айлăмсем, сарлака та тулли юханшывсен çыранĕсем, çырмасем – пурте вăрманпа хупланнă! Атăлăн сулахай енче – татти-сыпписĕр лăсăллă вăрман тăрăхĕ, сылтăм енче – анăçалла Сăр таран, кăнтăралла Кĕтне шывĕ патне çитичен тĕрлĕрен çулçăллă йывăççсен вăрманĕ кашлать.

Вăрман уçланкисенче, темлерен-темле унта-кунта кăна, вăйлă тапса тăракан çăлкуççсем çывăхĕнче, темиçе пĕчĕк пӳрт курма пулать. Кусем – пачах ют халăх çыннисен ялĕсем.

Çакнашкал вырăнсенче, авалхи çармăссен тата тĕллĕн-тĕллĕн мордвасен (мăкшăсен, ирçесен) ялĕсем хушшинче сапаланса пурăнма пуçланă хальхи тури чăвашсен тĕп аслашшĕсем Çавал тата Енĕш шывĕсен тăрăхĕнче. Куçса килнĕ чăвашсем те, çармăссем евĕрлех, сăрт çамкисенче пӳртсем лартнă, ансат хуралтăсем тунă кил таврашĕнче. Нумайăшĕн пӳрчĕсем çĕре чавса тунăскерсем кăна. Хăшĕсем, пĕрене хушса, пӳрчĕсене аслăрах та тума пултарнă. Улпутсем кăна ыттисенчен уйрăм, чаплă пысăк çуртсенче пурăннă.

Çапла пуçланса кайнă чăвашсен малтанхи ялĕсем. Тĕрлĕрен пулнă малтанхи ялсем. Ăçта – ялĕпе те пĕр-ик кил кăна, хăш ялсенче – пĕр вунă кил унта-кунта сапаланса ларнă. Çакна палăртмалла: авалхи чăвашсен ялĕсенче хальхи пек тӳрĕ вăрăм урамсем пулманн. Урам тени вăл, тепĕр майлă каласан, килпе кил хушшинчи пушă вырăн. Унта çынсем тата выльăх-чĕрлĕх таптаса такăрлатнă кукăр-макăр сукмак е лавпа çӳремелли сарлакарах çул. Кашни кил-çурт тавралла хăва е

шӗшкӗ хуллисене авкаласа тунӑ ҫатан карта, кӗрсе тухма – вӗрлӗк алӑк. Пӳрт тӑрисене те, хуралтисене те ҫапӑпа пусарса хӑмӑш е улӑм витнӗ.

Сӗм авалтанпа ларакан чӑваш ялӗсенче килсем пӗр-пӗринчен уйрӑмӑн, лаптӑкӑн-лаптӑкӑн вырнаҫнӑ. Кашни картишӗнчи пӳртсенче йӑхри темиҫе ҫемье пурӑннӑ. Хальхи тӳрӗ урамсенсенче ретӗн-ретӗн ларакан пӳртсене пӗр 1870-мӗш ҫулсем хыҫҫӑн тин ятарласа Хусан губернаторӗ ҫирӗп-летнӗ планпа килӗшӳллӗн тума тытӑннӑ. Авалхи ялсенче ӑнсӑртран вут-кӑвар тухас пулсан, улӑм витнӗ пӳртсемпе хуралтӑсем, хӑш чухне пӗтӗм ялӗ те тӗпӗ-йӗри юлмиччен ҫунса кӗл-леннӗ. Ҫакнашкал инкексене пула сахал мар ялсен ҫӗнӗ вырӑнсене куҫма тивнӗ.

Вут-кӑвара кунӗн-ҫӗрӗн сӳнтермесӗр, килти вучахри кӗл айӗнче хӗлӗн-ҫӑвӗн тытса тӑрасси, вӑл кил-ҫурта, пурлӑха ҫунтарса ярассин-чен сыхланса пурӑнасси пысӑк яваплӑх пулнӑ ҫынсемшӗн. Чӑн та, мӗнлерех нушаланса пурӑннӑ-ши авалхи чӑвашсем! Пӗчӗкӗ те хӗсӗк хура пӳрт, ачи-пӑчи йышлӑ, кӑмакине кирпӗчрен те мар, чулран купа-ланӑ, мӑрьи ҫук, вучах е кӑмака хутас пулсан, пӳрт тулли тӗтӗм. Вӑл уҫӑ алӑкран тата вӑкӑр хӑмпуне карнӑ пӗчӗк чӳречери шӑтӑк-ҫурӑксенчен йӑсӑрланса тухать тулалла. Пӳртре, йӳҫӗ тӗтӗмпе хуралса сӑрланнӑ стенасем тавралла – выртса тӑмалли сарлака саксем. Вӗсен ҫинче те, айӗнче те тӗрлӗ ӑпӑр-тапӑр. Хӑшӗсен пӳртӗнче урайне те хӑма сарман, ун вырӑнне якатса хытарнӑ тӑпра. Унта пысӑк кӗҫҫе е шӑналӑк пӑрахнӑ. Камсем урайне пӗрене чутласа тунӑ хӑма сарма вӑй ҫитернӗ, вӗсем, пӳртре ӑшӑрах пултӑр тесе, пӳрт варринче тарӑн шӑтӑк чавнӑ. /Ӑна тӗпсакай е урӑхла сак айӗн тӗпӗ теҫҫӗ. Нумай-нумай ял-сенче чухӑн чӑвашсем 1940-мӗш ҫулсенче те хура пӳртсенче пурӑннӑ, картиш тавралла вӗсен ҫатан картасем пулнӑ/.

Ҫулла авалхи тури чӑвашсем хӗл каҫиччен ҫимелӗх вир акса пуҫтарнӑ, ҫарӑк ӳстернӗ, тӗрлӗрен курӑк, тымарсем, кӑмпа, мӑйӑр, ҫырла типӗтнӗ, сӑра тума хӑмла хатӗрленӗ. Пулла, сунара ҫӳренӗ. Юрать-ха, мӗн кирли пӗтӗмпех ал айӗнчех пулнӑ! Кайӑк кӑвакалӗсем, хуркайӑксем, акӑшсем, пӑчӑрсем, ӑсансем, карӑксем, ашӗ ҫиме юрӑхлӑ ытти вӗҫенкайӑксем ҫырмасемпе шурлӑсенче те, вӑрманта та туллиех! Кашни кӳлӗре, Ҫавалта, Енӗшре, вӗсене юхса тухакан ҫырмасенче те темӗн чухлӗ тӗрлӗрен пулӑсем кӗтӗвӗ-кӗтӗвӗпе ишнӗ, Вӑрманта упа-

сем, пӑлансем, пӑшисем, пурӑшсем, хир сыснисем, хир качакисем тул-лиех. Мулкачӑсем, тилӗсем, пӑсарасем, паха тирлӗ хӑнтӑрсем, кӑшсем, сӑсарсем тытма кашни чӑваш сунарҫи питӗ ӑста пулнӑ. Вӗсен тирӗсен-чен ҫие тӑхӑнмаллисем ҫӗленӗ, суту-илӳре усӑ курнӑ.

* * *

Тобол таврашӗнче чӑвашсемпе кӳршӗллӗ пурӑннӑ венгрсем те чылай тытӑнса тӑман Уралта, килӗшмен вӗсене те остяксемпе вогул-сем сунара ҫӳресе, пулӑ тытса тӑранса пурӑнакан шурлӑхлӑ тайгари вырӑнсем.

Авалхи венгрсемпе чӑвашсем кӳршӗллӗ, питӗ тачӑ хутшӑнса пурӑннине нумай сумлӑ историксем ҫирӗплетсе каланӑ. Ҫак икӗ халӑхӑн культуринче, уйрӑмах вӗсен чӗлхинче, паянхи куна ҫитсе те нумай-нумай пӗрпеклӗхсем упранса тӑраҫҫӗ.

Авалхи венгрсен историне уйрӑм тапхӑрсенче вӗсемпе кӳршӗллӗ пурӑннӑ тӗрлӗ халӑхсен чӗлхисенчи пӗрпеклӗхсем тӑрӑх венгрсен паллӑ ученӑйӗ Бернат Мункачи тӗпченӗ. Вӑл 1894 ҫулта Бу-дапештра тухакан “**Ethnographia**” журналта «О происхождении пле-менного наименования **угры**» статья пичетленӗ. Мункачи каланӑ тӑрӑх, вогулсемпе остяксен чӗл-хинчи тюркла элементсене нумайӑшне ку таранччен ҫите-лӗклӗн тӗпчемен. Апла пулин те пӗрре пӑхнипех вӗсеннипе чӑвашсен чӗлхисенче питӗ тачӑ сыхӑну пурри ҫинчен кала-ма пулать. (14).

Золтан Гомбоц венгрсен историне тӗпчесе ҫырнӑ ӗҫӗнче (Zoltan Gombocz, Die bulgrisch-turkischen Lehnworter in der ungarischen Sprache, Helsinki, 1912) венгрсен чӗлхинче вӗсем халӗ пурӑнакан вырӑна куҫса киличченхи тапхӑрта тӗрӗк чӗлхинчен кӗрсе юлнӑ нумай сӑмахсем пурри тата ҫак сӑмахсенчен ытларахӑшӗ авалхи чӑвашсен чӗлхинчен куҫни ҫинчен калать. Унсӑр пуҫне, Гомбоц тӗпченӗ тӑрӑх, чӑваш чӗлхинчен куҫнӑ сӑмахсем мари, мордва, перм финно-угорсен чӗлхисенче те пур, анчах вӗсем ҫак чӗлхесене чылай кайран, венгрсен чӗлхине куҫнипе танлаштарсан, темиҫе ҫӗр ҫул иртсен тин куҫнӑ. (15).

Паллӑ чӗлхе ӑсчахӗ Б.А. Серебренников академик ҫапла каланӑ: «Финно-угр чӗлхисен фонетики чӑваш чӗлхине вӑйлӑн хистесе улӑштарни чӑвашсен мӑн аслашшӗсем Вӑта Атӑл тӑрӑхне пӑлхарсен-чен малтан килнӗ тесе шутлаттарать. Вӗсем ку вырӑна пирӗн эрӑри пӗр VI ӗмӗр тӗлнелле килме пултарнӑ». «Питех те пулма пултарать,

чăваш чĕлхи Кама тăрăхĕнчи пăлхарсенчен хĕвел тухăçнелли территоринче сарăлнă пулнă». (16).

Венгрсен чĕлхе ăсчахĕ Лайош Лигети академик хăйĕн «К вопросу об "алтайских" элементах венгерского языка» ĕçĕнче çапла каланă: «Çĕнĕ эрăри V–IX ĕмĕрсенче пулнă хăшпĕр тюркизмсем чăвашсен пĕр-пĕринчен мĕнпе те пулин уйрăлса тăракан темиçе диалектне кĕреççĕ пулмалла. Çакă та иккĕлентермест: венгрсен чĕлхи çакнашкал пур чĕлхесемпе те тата диалектсемпе те хутшăнăва кĕмен е, хутшăннă пулсан та, вăл çак кашни чĕлхепе диалектсен сăмахĕсене йышăнман». (17).

Венгрсен ăсчахĕ Йожеф Буденец, Уралпа Алтай халăхĕсен чĕлхисен специалисчĕ, (1858 çулта Геттинген университетне пĕтернĕ те Будапештра ĕçленĕ), чăваш чĕлхинчен венгрсен чĕлхине кĕнĕ сăмахсене тĕпченĕ, вара çапла пĕтĕмлетӳ тунă: «Вĕсем венгрсен чĕлхине авалхи чăвашсен тĕрлĕ диалекчĕсенчен кĕнĕ пулас. Çапла пулма пултарнă: венгрсене пăлхар–тюрксен икĕ юхăмĕ хистенĕ – малтан Урал регионĕнче, ун хыççăн Кавказра». (17).

Г.С. Сабирзянов каланă тăрăх, II-III ĕмĕрсенче хальхи Мордва, Чăваш тата Мари Элĕн Туçиçармăс районĕн çĕрĕсем çинче малтанхи авалхи пăлхарсем (протоболгарсем) пурăнма пуçланă. «Вĕсен пурнăçлăхĕпе авалхи чăвашсен халăх ушкăнĕ (вирьял чăвашĕсем) пуçланса кайнине çыхăн-тараççĕ» («с их жизнедеятельностью связывают начало формирования проточувашской этнической общности (группы вирьял)». (18).

Венгрсем 600 çулсен вĕçĕнче хальхи Пушкăртстан çĕрĕн-че Аслă Венгри патшалăхне йĕркеленĕ. Ун хыççăн венгрсем тепĕр хушă Пысăк Çарăмсан, Кондурча, Сок, Кинель шывĕсем таврашĕнче анатри чăвашсемпе тата ытти пăлхар çыннисемпе кӳршĕллĕ пурăннă та тухса кайнă кунтан та.

Вĕсем, хальхи Украина çĕрĕсем урлă куçса, 896 çул тĕлне Анат Дунай çине çитнĕ, вара яланлăхах çакăнта юлнă пурăнма. Çак вăхăта венгр халăхĕн хисепĕ 200–250 пин çын шутланнă. (19).

Паллă историксем çирĕплетсе пĕлтернĕ тĕслĕхсене пĕтĕмлетсен, акă мĕнле калани вырăнлă: пулас тури чăвашсен авалхи ушкăнĕ çĕнĕ эрăчченхи пĕр 1330 çултан пуçласа Алтай çĕрĕсем çинче венгрсемпе хутшăннă, çĕнĕ эрăри 156 çултан пуçласа Иртышпа Тобол шывĕсем

пӗрлешнӗ тӑрӑхра остяксемпе, вогулсемпе тата ку тӑрӑха Алтайран куҫса килнӗ венгрсемпе пуринчен те тачӑрах хутшӑнса пурӑннӑ. Пӗр 300 ҫулсен пуҫламӑнче вӗсем Вӑта Атӑлпа Кама вӑрри тӑрӑхӗнчи мари, мордва, удмурт халӑхӗсемпе юнашар килӗ-шӳллӗ пурӑнма тытӑннӑ. Кунта тури чӑвашсем выльӑхсем ӗрчетнипе пӗрлех ҫӗр ӗҫӗсене ытларах та ытларах тума тытӑннӑ, хӑйсем ку вӑхӑтра та венгрсемпе хутшӑнма пултарнӑ.

Ҫапла та палӑртсах калама пулать: венгрсенчен нумайӑшӗ Атӑлӑн сылтӑм енне те тури чӑвашсемпе пӗрлех куҫса килнӗ те, вӗсемпе тачӑ хутшӑнса, хӑйсен несӗлӗсем чӑваша куҫса кайичченех пурӑннӑ. Ҫакна тури чӑвашсем патӗнчи нумай ялсен ячӗсем тытӑмӗпе те, пӗлтерӗшӗпе венгрсен чӗлхинчи пек пулни ҫирӗплетет.

Алтайран тухнӑранпа анӑҫалла куҫса кайнӑ пулас анатри чӑвашсем Ҫурҫӗр Кавказ тӑрӑхне килнӗ хыҫҫӑн мӗнле пурӑннине историлле литературӑн нумай ҫӑлкуҫӗсенче тӗплӗн вуласа пӗлме пулать. Ҫавӑнпа халӗ ӑна кӗскен кӑна аса илӗпӗр.

158 ҫултанпа икҫӗр ҫул иртнӗ хушӑра анӑҫалла куҫакан хуннсем мӗнле пурӑнни ҫинчен историре тӗплӗн пӗлтерни ҫук. (3). Авалхи историк Дионисий Периегет 160 ҫулта гуннсем Арал тинӗсӗ патӗнче скифсемпе юнашар пурӑннине асӑннӑ. (20). Византи историкӗ Аммиан Марцеллин (300–400) Азов тинӗсӗ патне ҫитнӗ хуннсем 372 ҫулта алансемпе вӑрҫни ҫинчен пуҫласа ҫырнӑ. (3).

Алтай ҫӗрӗсем ҫинчен килнӗ сӑварсем (пулас анатри чӑвашсем) Европӑна ҫитнӗ хыҫҫӑн чылай вӑхӑт Ҫурҫӗр Кавказпа Азов тинӗс тӑрӑхӗнче пурӑннӑ. Кунта вӗсем пӑлхарсен шутне кӗрекен ытти йӑхӗсемпе пӗрле питӗ вӑйлӑ Аслӑ Пӑлхар патшалӑхне йӗркеленӗ. Тӗп хули Тамань ҫурутравӗ ҫинче вырнаҫнӑ, Хӑнакур (Фанагория) ятлӑ пулнӑ вӑл. Аслӑ Пӑлхар патши Кӑпрат вилнӗ хыҫҫӑн (660-мӗш ҫул тӗлнелле) унӑн ывӑлӗсем ҫак хӑватлӑ патшалӑха тӗпренех аркатса яраҫҫӗ. Аспарух ятлӑ ывӑлӗ ертсе пынипе пӑлхарсен пӗр пайӗ Балкан тӑрӑхне куҫса кайнӑ та Болгари патшалӑхне йӗркеленӗ, теприсем Патпайпа пӗрле Кавказа ҫул тытнӑ та унта балкар халӑхӗ пулса тӑнӑ. Виҫҫӗмӗшӗсем Боянпа пӗрле вырӑнтах юлнӑ, вӗсем кунти халӑхсем хушшинче ҫухалнӑ. Кӑпратӑн Кӑтра ятлӑ ывӑлӗ ертсе пыракан ушкӑн 669 – 670 ҫулсенче Атӑл тӑрӑх Анат Кама патне хӑпарнӑ. Ку ушкӑн Атӑлпа Кама пӗрлешнӗ вырӑнти ҫарансем тӑрӑх хӑйсен кӗтӗвӗсем

хыççăн куçса çӳрекен тури чăвашсенчен кăнтăрарах Атăлăн сулахай енне вырнаçнă пурăнма.

732 – 737 çулсенче хальхи Дагестан çĕрĕсем çинче пурăннă сăварсен (пулас анатри чăвашсен) пысăк ушкăнĕ те куçса килет Анат Кама çывăхне. Вĕсем пăлхарсенчен те кăнтăрарах (анатарах), кĕçех Дунай хĕррине куçса кайма хатĕрленнĕ венгрсемпе юнашар, Çарăмсан шывĕн тăрăхне вырнаçнă. Çапла вара, авалхи чăвашсем Алтайра икĕ ушкăна уйрăлнăранпа вăхăт пилĕкçĕр сакăрвунă çула яхăн иртнĕ хыççăн тин каллех пĕр вырăна пуçтарăнаççĕ.

Пăлхар ятпа паллă халăх ушкăнĕ Вăта Атăлпа Анат Кама тăрăхĕнчи ытти халăхсем хушшинче пуринчен вăйлăраххи те харсăртараххи пулнă. Вĕсен ертӳçисем пуçарнипе çак тăрăхри халăхсен пĕрлешĕвне йĕркеленĕ, ăна Атăлçи Пăлхар ят панă. Унăн пĕрремĕш йылтыварĕ (патши) Тукки пулнă теççĕ. Вăл 815 çулта вилнĕ. Унăн ывăлĕ «Айтар 865 çулта вилнĕ пулас. Мĕншĕн тесен историре çав çулхине Айтар ывăлĕ Шилкка (Шилки е Çилха) хăйне Атăлçи Пăлхарстан патши тесе пĕлтерни паллă». (21).

Шилкка 882 çулта вилнĕ. Унăн аслă ывăлĕ Паттăр-Мумин 895 çулччен ларнă патшара. Вăл вилсен, патша престолне 925 çулччен унăн шăллĕ Алмуш йышăннă. «Ун хыççăн Пăлхар патшалăхне Микаиль, Наср, Талиб, Мумин, Мумин Шамсун, Хайдар, Сагид, Бурадж, Ибрагим, Султан-Мурай, Ильгам (юлашки патша, 1236 ç. вилнĕ) ертсе пынă». (13). Ахмед патшара ларни паллă, унăн ывăлĕсем Микаиль Наср, Талиб, Мумин кнеçсем пулнă вăхăтра хăйсем хушшщинче хирĕçме тытăннă. Куна çак фактсемпе çирĕплетме пулать: Сăвар хулинче 931 çулта Наср-бен-Ахмед çапнă укçана тупнă, çак хуларах 959, 950, 953 тата 959 çулсенче Талиб укçа çапнă, 988 тата 992 çулсенче Пăлхарпа Сăвар хулисенче Мумин çапнă укçасене тупнă. (43).

Алмуш хăйĕн влаçне çирĕплетме тата патшалăха тĕреклетес тĕллевпе Багдад халифĕнчен пулăшу ыйтать. 908 çулта вунвиççĕре чухнех халифа ларнă Джафар ал-Муктадир хаваспах килĕшет Алмуша пулăшма. Атăлçи Пăлхар патшалăхне тĕреклетме унăн хăйĕн сăлтавĕсем пулнă: Анат Атăл таврашĕнчи Хасар каганачĕ мусульман сутăçисене Атăл тăрăх хăпарса вырăссемпе тата çурçĕр енчи ытти халăхсемпе суту-илӳ тума питĕ чăрмантарнă. Пăлхарсем те Хасар каганатне парăм тӳлесе пурăннă. Анатри чăвашсем уйрăмах Хасарта

хуçаланакан еврейсене хытă пăхăнса пурăннă. („лĕк Каспи тинĕсне Хасар тинĕсĕ тенĕ. Ку тинĕс тавра пурăнакан тĕрлĕрен халăхсем пĕр государствона – Хасар каганатне – кĕнĕ, çыннисене пĕр сăмахпа **хасарсем** тенĕ.)

921 çулта Багдадран Атăлçи Пăлхар патшалăхне пиллĕк пин çынран тăракан элчĕсен ушкăнĕ тухать. Ку ушкăнра хула тума, мечетсем купалама пĕлекенсем, ислам тĕнне йышăнтаракан çынсем тата ытти тĕрлĕрен ăстасем пулнă. Вĕсен обозĕнче лашасем кăна, тĕвесене шутламасăр, виçĕ пин пулнă. Çак пысăк каравана çар çыннисем сыхланă. Караван Хорезмра хĕл каçнă. Караванăн çулти-йĕрти пăтăрмахĕсене, Атăлçи Пăлхарти халăхсен пурнăçĕн йĕркисене, çутçанталăкăн уйрăмлăхĕсене, нумай турăсене ĕненекен пăлхар халăхсене ислам тĕнне мĕнле йышăнтарнине тата ыттисене те халиф ятарласа янă çын Ахмед ибн Фадлан (çак çынна пĕтĕм ячĕпе Ахмед ибн Фадлан ибн-ал Аббас ибн Рашид ибн Хамад тесе чĕннĕ) çырса кăтартнă. Унăн алçырăвне Иранти Мешхед хулинче 1923 çулта тупнă та фотокопине 1935 çулта СССР Наукăсен Академине панă. 1939 çулта Игнатий Юлианович Крачковский академик çак алçырăвне вырăсла куçарса «Путешествие Ибн-Фадлана на Волгу» кĕнеке кăларнă. Истори наукисен докторĕ Андрей Петрович Ковалевский профессор Ибн-Фадланăн алçырăвне çĕнĕрен вырăсла куçарнă та 1956 çулта Харьковра «Книга Ахмеда ибн-Фадлана о его путешествии на Волгу в 921-922 гг.» ятпа кĕнеке пичетленĕ. (22). А.П. Ковалевский çак алçырăвĕ тăрăх чăвашсемпе пăлхарсем çинчен ятарласа анлă та питĕ тĕплĕ шухăшлă статья çырнă, ăна Шупашкарта 1954 çулта наукăпа тĕпчев институчĕн ăсчахĕсен çырăвĕсен 9-мĕш кăларăмĕнче пичетленĕ. (23).

922 çулхи майăн 12-мĕшĕнче Багдад эвчисене Атăлçи Пăлхар патши Алмуш Атăлăн сулахай çыранĕнчен ултă çухрăмри Виçĕ Кӳлĕ ятлă вырăн патĕнчи хăйĕн Хĕллечĕ станĕнче йышăнать. Тепĕр тăватă кунтан Алмуша ислам тĕнне кĕртеççĕ те, вăл Джафар ибн-Абдаллах ятлă пулса тăрать (**Джафар** – Багдад халифĕн ячĕ, **ибн** – ывăл тенине пĕлтерет, **Абдаллах** – турă чури).

Алмуш хăйне пăхăнакан пур халăхсене те ислам тĕнне йышăнтарасшăн пулнă. Анчах чăвашсен пĕр ушкăнĕ хăйсен ват аслашшĕсем авалтанпа тытса пыракан тĕне пăрахма килĕшмен. Алмуш, тарăхнипе, чăвашсен çак ушкăнне хĕçпе вакласа вĕлерессипе хăратнă. Вушар

чăвашсем пурпĕрех парăнман, хăйсен ĕмпĕвĕ Вырăх ертсе пынипе Атăлăн сылтăм çыранне куçса кайнă.

Ку ушкăнри чăвашсем шăпах 730-мĕш çулсенче Çурçĕр Кавказран куçса килĕ анатри чăвашсем пулма пултарнă. Вĕсен аслашшĕсем Çурçĕр Кавказра пурăннă чухнех Хасар каганатĕнче хуçланакан еврейсене экономикăпа культура енчен пăхăнса пурăннă. 965 çулта Киев кнеçĕ Святослав Саркел хулине (вăл Дон шывĕн хĕрринче пулнă) тĕпрен аркатнипе Хасар каганачĕ истори аренинче çухаличенех тăсăлнă çак пăхăнуллă пурăнăç. Вăл хушăра еврейсен нумай сăмахĕсем чăваш чĕлхине кĕрсе юлнă. Тĕслĕхрен, **Шăмат** ялĕн ячĕ (хальхи Советское, Муркаш районĕнче) еврейсен чĕлхинче «**шăматкун»** тенине пĕлтерет. (Çакă та паллă: Çĕмĕрле районĕнчи **Хутар** ялĕн ячĕ еврейсен чĕлхинче **«илемлĕ»,** венгрсен чĕлхинче **«хăнтăр шывĕ»** тенине пĕлтерет). Эппин, уйрăм ялсем те никĕслеме пултарнă пулсан, Вырăх 922 çулта ертсе килнĕ анатри чăвашсем нумайăшĕ Чăваш Республикин çурçĕр-хĕвеланăç енчи вырăнсенче пурăнма вырнаçнă тесе татăклăн калама пултаратпăр.

Ахмед ибн-Фадлан çырнă тăрăх, 922 çулччен Атăлçи Пăлхарта хуласем пулман. Çавăн пирки Алмуш патша Багдад элчисене хулари чаплă керменте мар, хĕллехи вăхăтра хăй пурăнакан пысăк юртăра йышăннă, тенĕ вăл. Ибн-Фадлан çапла каланă пулин те, çакна асра тытни вырăнлă: чăвашсем те, пăлхарсем те 922 çулччен хула курман çынсем мар. Сăмахран. Çурçĕр Кавкавказ тăрăхĕнче пурăннă вăхăтра Аслă Пăлхар патшалăхĕн Хăнакур ятлă тĕп хули пулнă, анатри чăвашсен 700-мĕш çулсен пуçламăшĕнче Дагестан çĕрĕсем çинче пурăннă тапхăрта Сементер ятлă тĕп хули пулнă. Çавăнпа та Виçĕ Кӳлĕ çывăхĕнчи Пăлхар хулине тата Вăтăк (Утка) шывĕ хĕрринче чăвашсем (сăварсем) хăйсен ятне Сăвар хулине 922 çул хыççăн тин тума тытăннă тенипе килĕшме йывăр. Вĕсем, тен, Ибн-Фадлан килнĕ чухне ытти çĕршывсенчи пек питĕ чаплă хуласем пулман. Сăвар хулинче, акă, 931 çулта сăварсен Наср-ибн-Ахмед кнеçĕ укçа çапма тытăннă. (Смирнов А.П. Древняя история чувашского народа. Чебоксары, 1948). (43).

❃ ❧ ❃ ☙ ❃

# Çавал тăрăхĕнчи Тăрăн улпутлăхĕ

**Ч**ăваш Енте пурăнакан чăвашсене хальхи вăхăтра, вĕсен этнографи уйрăмлăхĕсене кура, виçĕ пысăк тĕп ушкăна уйăраççĕ: турисем, анат енчисем тата анатрисем. Çав вăхăтрах çак ушкăнсенче калаçури чĕлхе, кĕпе-тумтир тата культурăпа йăла-йĕркесенчи уйрăмлăхсене шута илсен, тата темиçе пĕчĕк ушкăнсене палăртма пулать.

Акă, тури чăвашсен ушкăнĕнче çакнашкал пĕчĕк ушкăнсем пур: 1) çурçĕр-хĕвеланăç, е Сĕнтĕр енчисем, 2) Хĕрлĕ Чутай енчисем, 3) вăта, е Выла-Атăл енчисем тата 4) кăнтăр-хĕвелтухăç, е Тури Çавал енчисем.

**Чăвашсен этнографи ушкăнĕсем (34).**

– этнографи ушкăнĕсен чикки
– этнографи ушкăнĕн пайĕсен чикки

**I – Анат енчисем**:
1) Ç–Ха е Анатри Çавал енчисем
2) К–Хт е Енĕш - Çавал енчисем
3) мал енчи е Куславкка енчисем

**II – Турисем:**
1) Ç – Ха е Сĕнтĕр енчисем-
2) Чутай енчисем
3) вăта е Выла - Атăл енчисем
4) К–Хт е Тури Çавал енчисем

**III – Анатрисем:**
1) Ç е Урăм – Енĕш енчисем
2) К–Хт е Урăм – Карлă енчисем
3) К–Ха е Пăсна – Кира енчисем




Анат енчи чăвашсен ушкăнĕнче çак пĕчĕк ушкăнсем пур: 1) çурçĕр-хĕвеланç, е Анатри Çавал енчисем, 2) кăнтăр-хĕвелтухăç, е Енĕш-Çавл енчисем, 3) мал енчи, е Куславкка енчисем.

Анатри чăвашсене виçĕ пĕчĕк ушкăна пайлаççĕ: 1) çур-çĕр, е Урăм-Енĕш енчисем, 2) кăнтăр-хĕвелтухăç, е Урăм-Карлă енчисем тата 3) кăнтăр-хĕвеланăç, е Пăсна-Кира енчисем.

Анчах чăвашсене çак ушкăнсене пайлани XX ĕмĕр пуçламăшĕнчен маларах кăна вырăнлă пулнă теме пулать, хальхи вăхăтра ку уйрăмлăхсем питех палăрса тăмаççĕ.

Чăваш Енти Шупашкар районĕнче халĕ Тăрăн (Туруново) ятлă пĕртен-пĕр ял пур. Вăл Ункă шывĕн Кăшканар ятлă юппинчен пĕр çухрăмра, Шинер (Юçĕ) çырмин сылтăм çыранĕнче вырнаçнă.

Мĕне пĕлтерет унăн ячĕ? Хăçан тата мĕнле пулса кайнă çак ял? Чăвашсен çĕрĕнче тахçан-авал татах пулнă-и Тăрăн ятлă ялсем? Хальхи вăхăтчен упранса юлнă-и вĕсем? Кунта тата акă мĕн хушса каламалла: 1950-мĕш çулсемчченех çак ялăн ятне вырăнти тури чăвашсем калаçура Тăрăн темен, пуриншĕн те вăл Мăн Çорт (Большой Двор) пулнă. Хут çинче кăна унăн ятне чиркӳллĕ Тăрăн (село Туруново) тесе çырнă. Çакна мĕнле ăнланмалла?

Ума тăрăтнă ыйтусене йĕркипе кайрантарах анлăн ăнлантарма тăрăшăпăр, малтанлăха вара кĕскен çапла каланипе çырлахăпăр.

Тӳрех калас пулать: **тăрăн** сăмахăн пĕлтерĕшне чăваш чĕлхинче мар, венгрсен чĕлхинче шырама тивет. Венгрсен чĕлхинче **торонь** сăмах **башня** (çӳллĕ çурт) тенине пĕлтерет. (29). Эппин, ахальтен каламан иккен кунти чăвашсем çак ялăн ятне Мăн Çорт тесе калаççĕ – кунта тахçан-авал питĕ чаплă пысăк кил-çурт пулнă.

Хальхи вăхăтра Чăваш Енте Тăрăн ятлă ялсем тата виççĕ пур – пĕри Патăръел районĕнче Пăва шывĕ хĕррине вырнаçнă, тепри Канаш районĕнче Кĕçĕн Çавал хĕрринче, виççĕмĕшĕ Шăмăршă районĕнче – вăл Вăрманти Тăрăн (вырăсла Новое Буяново) ятлă. Хальхи Красноармейски район территоринче иртнĕ ĕмĕрте тата тепĕр Тăрăн ятлă яла палăртнă. Ăна «Список населенных мест Российской империи... X1V, Казанская губерния, СПб, 1866» кĕнекере Алманчино е Ойкас Туруново тесе çырнă. (28). Халĕ çакна асăрхаттарни вырăнлă: маларах асăннă Пăвапа Кĕçĕн Çавал шывĕсем хĕрринчи икĕ ялне Тăрăн (Мăн Çорт) çывăхĕнчи ялсен çыннисем пуçарса янă, Вăрманти Тăрăн ялне вара кайрантарах Пăва хĕрринчи Тăрăн ялĕнчи чăвашсем никĕслеме пултарнă. Çапла ĕнтĕ, чăвашсем хăйсем ăçтан куçса килнине асăнмалăх çĕнĕрен никĕсленĕ ялсене Тăрăн ят панă.

Çакăнта акă мĕне палăртса хăварăпăр.

Пăва шывĕ хĕрринчи Тăрăн ялне (Хирти Тăрăн) Шупашкар уесĕнчи Тăрăн вулăсне кĕнĕ Пĕрремĕш Тăрăн ял ушкăнĕнчи хальхи

Анаткас, Енĕшкасси, Кучак çыннисем Алексей Михайлович Романов (1629 – 1676) патшара ларнă вăхтра пĕр 1670-мĕш çулсенче никĕсленĕ пулмалла. 1722 çулта халăхсене шута илнĕ документ тăрăх (41), ку яла пуçарса яракансенчен пĕрисем Охукассинчи (халĕ Анаткас Тăрăн ялĕ) Селеней Мурзалин (1642 – >1722), Салтупай Толбаев (1649 – >1722), Байтуш Идеряков (1658 – >1722), Енĕшкассинчен – Андрешка Янедерин (1669 – 1722), Кучакран – Иртула Адепов (1658 – >1722) пулнă. Андрешка Янедеринăн ывăлĕ Кеми (1702 – >1744) тата мăнукĕ Митропан (1736 – >1744) ку çĕнĕ вырăнта 1744 çулта халăха шута илнĕ чухн те пурăннă.

Шупашкар районĕнчи Вăрманкас Тăрăн ялне Энтимĕркасси çыннисем 1770-мĕш çулсен пуçламăшĕнче никĕсленĕ. Ку çынсем çаксем: Артемий Родионов Ортишка (1717 – >1793), Ермолай Родионов Ермай ((1732 – >1793), Яков Васильев Якушка (1704 – 1782), Илка /Абрам/ Шадеряковăн (1702 – >1744) виçĕ ывăлĕ Игнатий Абрамов Хвандей (1779 – 1781), Яков Абрамов Яшутка (1735 – >1793), Иван Абрамов Иштубай (1738 – >1793), Степан Васильев Катников (1739 – >1785). 1779-мĕш çулта çĕнĕ ялта пĕтĕмпе те çичĕ кил пулнă, Яшмула Яшкильдин е вăлах Ермолай Васильев Яшмула (1718 – 1782) çĕнĕ яла 1780-мĕш çулта куçса ларнă.

Кĕçĕн Çавал шывĕ хĕрринчи Тăрăн ялне 1867 çултан пуçласа кĕске вăхăтрах Кучак, Тăрăн, Шинер тата Иккĕмĕш Тăрăн ял ушкăнне кĕрекен Лепетер, Энтимĕркасси ялĕсенчи вăтăра яхăн çынсен çемйисем никĕсленĕ.

XV11 тата X1X ĕмĕрсемччен тури чăвашсем пурăнакан тăрăхра **Тăрăн** ятлă тепĕр икĕ ял пулни паллă. Вĕсенчен пĕри – Атăлăн сылтăм енче Хĕрлĕ Чутайран инçех мар вырнаçнă Пысăк Тăрăн ялĕ. Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн архивĕнче ку ял çинчен çапла çырнине вулама пулать: «Запись грамот приказа Казанского дворца по Курмышскому уезду за 1617-1661 гг. ”144-го марта в 21 день в грамоте Великого государя по приказу Казанского дворца на Курмыш воеводе Павлу Бабарыкову по челобитию Ядринского уезда **деревни Больших Турунов** Акмурска Екшильдин Курмышского уезда деревни Красной Четаевой на черемисана Постугана Кунакова и того Постугана сыскав за поруками в Акмурскове иску во 105 рублях с полтиною выслать к ответу к Москве. Писано 144-го февраля в 7

день”». (24). 1794 çулта çĕре пайланă хыççăн çырнă «Экономические примечания» документра Пысăк Тăрăн ялĕн ятне кăтăртман, эппин, вăл пĕтнĕ пулас,

Н. Спасский хăйĕн кĕнекинче Царевококшайск хулинчен (хальхи Йошкар-Ола) пилĕк çухрăмра тепĕр Тăрăн ялĕ пулни çинчен çырать. (25).

И.С. Галкин та çак ял çинченех çапла пĕлтерет: ку ял Маринче XVIII ĕмĕрччен пулнă, вăл халĕ çук* унăн ячĕ пăлхарсен ТУРУН (князь) сăмахĕпе çыхăннă* авал нумай турăсене ĕненекен çармăссен Турун тата Торун ятлă çынсем те пулнă. (26).

Архив материалĕсенче 1725 çулта Царевококшайск уесĕнчи Тăрăн ялĕнчи çын Васил Адамасу христиан тĕнне йышăнни çинчен пĕлтерни пур. (27).

1866 çулта пичетленĕ Раççейри ялсен списокĕнче Царевококшайск хулинчен çичĕ çухрăмра Семеновка шывĕ хĕрринче Туруново (Никитина) ятлă ял пуррине кăтартнă. Ку ялта вăл вăхăтра пĕтĕмпе те вунпĕр кил пулнă, вăтăр пĕр арçынпа хĕрĕх виçĕ хĕрарăм пурăннă (28).

Халĕ асăннă виçĕ Тăрăн (Svnкă шывĕ тăрăхĕнчи, Етĕрнепе Йошкар-Ола хулисем çывăхĕнчи) ялĕсем пирки мĕн калама пултаратпăр-ха эпир?

Çак ялсене авалхи тури чăвашсем Бату хан Атăлçи Пăлхар патшалăхне 1236 çулта пăхăнтарнă хыççăн мар, 922 çулта Вырăх ĕмпӳ чăвашсен пĕр ушкăнĕпе Атăлăн сылтăм çыранне куçса килнĕ хыççăн та мар, ку вăхăтсенчен чылай малтан, хăйсем 200 çулсен вĕçнелле е 300 çулсен пуçламă-шĕнче Вăта Уралтан Камăпа Атăл пĕрлешнĕ тăрăха куçса килсен никĕсленĕ. Вăл тапхăрта тури чăвашсем, венгрсемпе тачă хутшăнса пурăннăран, «тăрăн» сăмахпа анлăн усă курнă. Вĕсен ятлă-сумлă улпучĕсем ытти çынсен килĕ-çурчĕ-сенчен уйрăлса тăракан чаплă çуртсенче пурăннă, ку çуртсене халăх ТОРОН тенĕ. Тата çакна та пĕр иккĕлен-месĕрех калама пулать: тури чăвашсем Вăта Уралтан куçса килнĕ хыççăн çармăссем хушшинче Атăлăн икĕ енче те, уйрăмах Çавалпа Кокшака шывĕсен таврашĕнче, йышлăн сапаланса пурăнма пуçланă.

Çапла ĕнтĕ, Атăлăн сылтăм çыранне Вырăх /Урак/ ĕмпӳ 922 çулта ертсе килнĕ чăвашсен ушкăнĕ пушă вырăна килмен. Вĕсенчен хăшĕсем Атăлпа Мăн Çавал тата Сăр хушшинчи Йăрсшу, Ункă, Шет-

мĕ, Сĕнтĕр шывĕсем таврашĕнчи, çавăн пекех Мăн Енĕшпе Кĕçĕн Енĕш шывĕсен ту вĕçĕнчи çĕрĕсем тавралла авалхи çармăссемпе тури чăвашсем пурăнакан çĕрсем çине вырнаçнă. А.П. Ковалевский историк шучĕпе те, ку вăхăт тĕлне тури чăвашсем Атăлăн сылтăм çыранĕнче пурăнма пултарнă. (23).

Вырăс çулçыравĕсенче (летопись) ку тăрăхра хуçаланакан улпутсене **турунсем** тенĕ. Кун пирки çак тĕслĕхе илсе кăтартма пулать: «Болгаре, поклонившись великому князю Юрию, просиша мира, за шесть лет бывше размирью. И сотвори мир с ними, и тольми менися, и люди их пусти, свое у них поима, и крест к ним целова* а Болгаре в свою роту идоша, т р у н о в е  и вся чернь». (35).

Илсе кăтартнă тĕслĕхре сăмах 1230 çулта Владимир кнеçĕ Юрий Всеволодович (1188-1238) Атăлçи Пăлхар патшалăхне вăрçăпа килсе кунти хуласемспе ялсене хаяррăн тустарни çинчен пырать. Вырăс летописецĕ каланă тăрăх, ултă çул хушши тапăçса пуръннă хыççăн, çапăçма чарăнсан, пăлхарсем, Юрий кнеç умĕнче мĕскĕнĕн пуçĕсене пĕксе, вырăссене мирлешме йăлăнаççĕ, вăрçă пынă вăхăтра тыткăна лекнисене пĕр-пĕрине тавăрса параççĕ, юлашкинчен, хĕреçе чуп туса, мирлĕ килĕшӳ тума пынă пăлхарсен тăрăнĕсемпе ахаль çар çыннисем хăйсен карманне каяççĕ. (Çак летопиçре асăннă Владимир хулин кнеçĕ Юрий Всеволодович Мускав хулине никĕсленĕ Юрий Владимирович Долгорукий (1090-1157) кнеçĕн мăнукĕ пулать).

Палăртатпăр, вырăс çарĕсем Атăлçи Пăлхар çĕрĕсем çине часчасах тапăннă. Вĕсем яланах Атăл тăрăх килнĕ, çавăнпа та чи малтан вырăс вăрă-хурахĕсемпе тури чăвашсен улпучĕсен (тăрăнĕсен) çар çыннисем (нукерĕсем) çапăçма пуçланă, вĕсенех чĕнмен хăнасене каялла «ăсатса» яма тивнĕ. Паллă ĕнтĕ, 1230 çулта Владимир кнеçĕпе ирттернĕ мирлĕ калаçура та шăпах çак тăрăнсемпе вĕсен нукерĕсем пулнă. Вырăс кнеçĕсен çуран салтакĕсем Атăл тăрăх кимĕсемпе аннă пулсан, утлă çар çыннисем тата пысăк обозсемпе пыраканнисем тури чăвашсем пурăнакан ялсене тустарса иртнĕ.

Вырăссен летопиçĕнче çырнă тăрăх, 966 çулта вăрçма питĕ юратакан Киев кнеçĕ Святослав, Атăл тăрăх ту енчен пырса, Атăлçи Пăлхар çĕрĕсене хытă аркатнă. Çав çулах вăл Хасар патшалăхне (Хазар каганачĕ пĕр 650-мĕш çулта йĕркеленнĕ) çаратнă. Святослав кнеçĕн вăрă-хурахла çарĕ тискеррĕн пусмăрланинчен хăранипе

пӑлхарсен пӗр ушкӑнӗ 970 ҫул тӗлӗнче Дунай шывӗ ҫине венгрсем патине тарнӑ та унта Пешт хулине туса пурӑнма тытӑннӑ.

985 ҫулта Киев кнеҫӗ Владимир Святославович Сар Хӗвел (вӑл Раҫҫей халӑхне христиансен тӗнне йышӑнтарнӑ) ҫарпа килсе ҫаратнӑ пӑлхарсен ҫӗршывне. Унӑн ҫарӗ пӑлхарсене ҫӗнтернӗ, анчах куккӑшӗ Добрыня ҫапла каланӑ пулать кнеҫе: «Эпӗ тыткӑна лекнисене куртӑм. Вӗсем пурте сӑран атӑсемпе. Кусем пире хырҫӑ тӳлес ҫук, каяр ҫӑпаталлисиене шырама». Вара кнеҫ пӑлхарсемпе килӗшӳ тунӑ. Пӑлхарсем тупа туса ҫапла хирӗҫ каланӑ, тет, вырӑссене: «Эпир ку ҫураҫӑва пӑссан, чул та шывпа юхӗ, хӑмла та шывра путӗ.»

987 ҫулта Владимир Святославович нумай турӑсене ӗненекен Киев Руҫӗнчи вырӑссене валли урӑх тӗн суйланӑ. Атӑлҫи Пӑлхарӗнчи мусульмансен тӗнӗ уна килӗшмен, вара вӑл Византийӑри христиансен тӗнне ырланӑ та 988 ҫултан пуҫласа Раҫҫей ҫыннисене ҫак тӗне йышӑнтарма тытӑннӑ. Раҫҫейре ку тӗне теимиҫе ҫӗр ҫул хушши халӑх грексен тӗнӗ тенӗ.

994 – 997 ҫулсенче вырӑссем пӑлхарсемпе вӑрҫнӑ.

996 ҫулта Владимӗрӗн ҫарӗ Ока шывӗпе аннӑ та малаллаа Атӑл тӑрӑх аната ҫитиех пырса пӑлхарсен ялӗсене тустарнӑ. Ун чухне вырӑссене Хазар хулисене ҫаратма торксем (гузсем) пулӑшнӑ. 966 ҫул хыҫҫӑн ҫӗнӗрен ҫӗкленнӗ Итиль хулине вӗсем чул купи пуличчен аркатнӑ, Баранджарпа Сементер хулисенчи иҫӗм сачӗсене ҫунтарса кӗл тунӑ.

Ҫапла икӗ патшалӑх хуҫаланма тытӑннӑ: Анат Атӑл тӑрӑхӗнче – Киев Руҫӗ, Вӑта Атӑл тӑрӑхӗнче – Атӑлҫи Пӑлхарӗ.

1006 ҫулта пӑлхар элчисем Киевра икӗ патшалӑхӑн сутуҫисем малашне пӗр-пӗрин патӗнче суту-илӳ тума ирӗклӗ ҫӳреме пултараҫҫӗ тесе килӗшӳ тунӑ.

1068 ҫултанпа вырӑссем хӑйсене половецсем пӗрмай тапӑннӑран Вӑта Атӑл тӑрӑхне ҫаратма ҫӳреме пултарайман, ҫавӑнпа вӗсем Атӑлҫи Пӑлхар патшалӑхне тапӑнман.

1080 ҫулта вырӑссем Муром хулине никӗсленӗ, вӑл Муром княжествин тӗп хули тата Руҫӗн хӗвелтухӑҫ енчи тӗрекӗ пулса тӑнӑ.

1087-1088 ҫулсенче Новгород ушкуйникӗсем (хӗҫпӑшаллӑ дружиниксем) ҫаратса ҫӳренӗ пӑлхарсене.

1096 çулта вырăссем Рязань хулине никĕсленĕ – ку Руçĕн кăнтăр-хĕвелтухăçри тепĕр тĕрекĕ пулса тăнă.

1107 çулта ушкуйниксем вĕçĕмсĕр мăшкăланипе тарăхса çитнĕ пăлхарсем вырăссене тавăрма кайнă та Суздаль хулине çавăрса илнĕ, ăна хупласа тăнă, таврари нумай çынсене вĕлернĕ.

1120 çулта Суздаль вырăсĕсем хăйсен кнеçĕ Юрий Владимирович Долгорукий ертсе пынипе пăлхарсем патне вăрçăпа килнĕ, вĕсене çаратнă, нумай çынсене тыткăна илсе кайнă. Кнеçе Вăрăм алă ята шăпах ют çĕрсене хапсăнса пурăннăшăн панă. Вăл 1147 çулта Кучково ялĕпе кунти Степан Иванович Кучка бояринăн килĕ вырăнĕнче Мускав па Неглиннăй шывĕсем пĕрлешнĕ çĕрте Мускав хулине никĕсленĕ, хăйĕнпе хирĕçсе кайнă Кучка боярина вĕлерме хушнă.

Владимир кнеçĕ Андрей Юрьевич Боголюбский хуçа пулма, ыттисене пăхăнтарма юратнă. Унăн пĕр арăмĕ половецсен кнеçĕн хĕрĕ, тепри – пăлхар ханĕн хĕрĕ пулнă. Вăл уйрăмах хытă тустарнă тури чăвашсене. 1164 çулта вăл пысăк çарпа пăлхарсене сасартăк тапăннă. Çакна кĕтмен пăлхарсем вăрçма хатĕр пулман. Вырăссем вĕсен тĕп хулине тата темиçе пĕчĕк хулана çунтарса янă, питĕ нумай выльăх-чĕрлĕхе, çынсене тыткăна хăваласа кайнă.

1172 çулта Андрей Боголюбскийĕн ывăлĕ Мстислав тата Муромпа Рязань кнеçĕсен ывăлĕсем ертсе пыракан çар çыннискен ушкăнĕсем Пăлхар патшалăхне килнĕ те ултă яла, пĕр хулана çаратса çунтарнă. Пăлхарсем ултă пин çынран тăракан çар пухнă та тăшмансене хăваласа янă, çаратса кайнă хăйсен япалисене каялла илсе килнĕ. Кун хыççăн тĕп хулана Пăлхар вырăнне Пӳлере куçарнă.

1183 çулта Владимир кнеçĕ Всеволод Юрьевич (1154–1212) хăйĕн çарĕпе Пăлхар патшалăхне тапăнса килнĕ те Çавал шышĕ хĕрринчи пăлхарсен авалхи хулашĕ патĕнче чăвашсемпе çапăçнă. Каярахпа кунта Çĕрпӳ ялĕ пулса кайнă. 1584 çулта вырăссен Хаяр Йăван патши стрелецсене валли çĕнĕ крепоç тума ку яла унăн хуçинчен Пулатран туртса илнĕ, ял çыннисем пурăнма урăх вырăнсенче Çĕнĕ Çĕрпӳел тата Аслă Çĕрпӳел ялĕсене никĕсленĕ.

1183-1184 çулсенче пăлхарсем вырăссене 1164-мĕш çулта хăйсене тустарнăшăн тавăрнă. Пăлхарсем ку хутĕнче Суздаль, Рязань, Муром таврашĕнчи вырăнсене çĕмĕрсе çӳренĕ. Вырăссем çакăншăн тарăхнипе пысăк çар пухнă та Пăлхар патшалăхне килсе пит нумаă

çынсене вĕлернĕ, ялсемпе хуласене тустарса çунтарнă, каялла кайнă чухне пăлхарсемпе пусмăрла килĕшӳ тунă – вырăс сутуçисем хыснана укçа тӳлемесĕрех Пăлхарта суту-илӳ тума пултарнă, вырăссен тырпул çитмен чухне вĕсене пăлхарсен тырă парса тăмалла пулнă.

1186 çулта вырăссен Аслă кнеçĕ Всеволод Юрьевич Пысăк Йăва каллех Пăлхар çĕрне вăрçăпа килнĕ, мĕншĕн тесен пăлхарсем 1184 çулта тунă килĕшĕве пурнăçласа пыман. Вырăссем ялсене çаратнă, нумай çынсене тыткăна илсе кайнă.

1205 çулта Всеволод Юрьевич кнеç тепре те тапăнса килнĕ Атăл тăрăх пăлхарсем патне. Анчах ку хутĕнче чăвашсем вырăссене çĕршыв ăшне шалалла кĕме паман. Çав хаяр çапăçусене нумай чăвашсем хăйсен пуçĕсене хунă.

1218 çулта пăлхарсен çарĕ вырăссен çурçĕр енчи çĕрĕсем çине тапăнса кайнă та вĕсен Устӳк хулине илнĕ.

1220 çулта вырăссем Юрий Всеволодович кнеç ертсе пыракан пысăк çарпа Атăл тăрăх аннă та пăлхарсен çĕршывне кĕрсе кайнă. Атăлăн сылтăм енче хальхи Тетĕш хули çывăхĕнчи Ошел хулине илнĕ, ăна июнĕн 15-мĕшĕнче тĕппе çунтарса янă. Кунти çапăçусенче питĕ нумай чăвашсем хăйсен пуçĕсене хунă.

1221 çулта Юрий Всеволодович кнеç мордвасен çĕрĕ çинче Ока шывĕн вăрринче Руçĕн хĕвелтухăçри хăватне çирĕплетме Чулхулана никĕсленĕ. Окапа Атăл шывĕсен тăрăхĕнче мордвасен çĕрĕсем çине тимлесех вырăссене пурăнма куçарма тытăннă. Çакна пула Сăр шывĕн тăрăхĕнче тури чăвашсем ирĕксĕрех вырăссемпе тачă юнашар пурăнма пуçланă.

Çапла ĕнтĕ, темиçе çĕршер çулсем тăршĕнче тури чăвашсен çĕршывне тăшмансем калама çук нумай хутчен таптаса иртнĕ, чăвашсен мĕн чухлĕ çар çыннисем юн тăкнă çак хаяр тытăçусенче! Мĕн тери мул пĕтнĕ, çурт-йĕрĕ çунса кĕлленнĕ тури чăвашсен, ялĕсем арканса çĕр питĕнчен çухалнă. Ним айăпсăр халăха çаратса, пусмăрласа, тӳсме çук пысăк хĕн кăтартса пурăннă сĕмсĕр тăшмансем.

Чăвашсен паллă чĕлхе ăсчахĕ Николай Иванович Ашмарин (1870-1933) «ТĂРĂН» сăмах пирки хăйĕн питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ «Пăлхарсем тата чăвашсем» ятлă тĕпчев ĕçĕнче акă мĕнле каланă: «Верховная власть в Волжской Болгарии принадлежала царю, под властью которого находилось несколько подчиненных ему мелких

царьков* повидимому было также высшее сословие, нечто в роде знати, которое Троицкая летопись называет в одном месте словом ТРУНОВЕ. Не знаю, есть ли возможность объяснить это слово из восточных языков, но замечу только, что это наименование, если мы отбросим славянское окончание им. п. мн. ч. ОВЕ, напоминает собою названия нескольких сел и деревень, расположенных в уездах Козмодемьянском, Буинском и Царевококшайском. В первых двух уездах мы находим чувашские селения под именем Т у р у н о в о, называющиеся по-чувашски Тăрăн (ТОРОН), а в последнем есть дер. Турунова, около которой видна какая-то насыпь, слывущая в народе под названием кургана». (14).

Н.И. Ашмарин «ТĂРĂН» сăмах пирки хăй çапла шутланине С.М. Шпилевскин «Древние города и другие булгарско-татарские памятники в Казанской губернии. Казань, 1877» кĕнекинче çырнипе çыхăнтарать. «Болгары и чуваши» ятлă тĕпчеве Н.И. Ашмарин уйрăм кĕнекепе 1902 çулта Хусанта пичетленĕ. Куратпăр ĕнтĕ, çĕр çул каялла тĕнчери нумай халăхсен чĕлхине пĕлекен ăсчах Н.И. Ашмарин та «ТĂРĂН» сăмах пĕлтерĕшне татăклăн ăнлантарма аптранă.

Кунта çакна палăртса каласа хăвармалла: чăвашсем пăлхарсенчен пулса кайнă е вĕсен тӳрĕ несĕлĕсем, теççĕ хăшпĕр ăсчахсем. Н.И. Ашмарин та хăйĕн «Болгары и чуваши» кĕнекине шăпах çак теорие аталантарса тата çирĕплетсе çырнă. Апла пулин те вăлах каярахпа çапла та каланă: «Чĕлхепе историн мĕн пур тĕслĕхĕсем чăвашсем авалхи пăлхарсен несĕлĕсем пулнине çирĕплетеççĕ, анчах çавăн пек пулсан та çапла шутламалла пулĕ: авалхи Атăлçи пăлхарĕсем ытти халăхсем хушшинче кăна çавăн пек ятпа palăрнă пулас, хăйсене вĕсем чăваш тесе чĕннĕ». Ку сăмахсене вăл М.П. Петров (Тенехпи) патне янă çырура каланă, çырăвăн çак пайне Тенехпи хăйĕн 1925 çулта Шупашкарта тухнă хăйĕн «Чăвашсем пуçланса кайни» кĕнекинче пичетленĕ, тесе пĕлтерет В.Д. Дмитриев академик. (36).

Пирĕн шутпа, чăвашсене тепĕр майлă пăлхарсем тенинчен нимĕн тĕлĕнмелли те çук. Калăпăр, хальхи вăхăтра Раççейре миçе тĕрлĕ вак халăх пурăнать пулĕ, анчах та ытти çĕршывсенчи халăхсемшĕн вĕсем пурте кунти тĕп халăхсен ячĕпе вырăссем шутланаççĕ. Çакнашкал тĕслĕхсене тĕнчери кашни пысăк çĕршывра пурăнакан вак халăхсем пирки те илсе кăтартма пулать.

*Эппин, чăвашсем нихăçан та пăлхарсем пулман, вĕсем сĕм авалтанпах савир (сăвар, сăвас, чăваш) халăхĕ ятпа паллă пулнă (тĕрлĕ вăхăтра ытти халăхсем вĕсене хăйсен чĕлхипе урăхларах та чĕнме пултарнă). VIII ĕмĕр варринче Вăта Атăл тăрăхĕнче пăлхар йăхĕнчи ертӳçĕсем пуçарнипе йĕркеленĕ Атăлçи Пăлхар патшалĕхне кĕрсен тин чăваш халăхĕн ячĕ тĕнчери ытти халăхсемшĕн манăçа тухнă, апла пулин те вĕсен чĕлхи Пăлхар патшалăхĕнче тĕп чĕлхе шутланнă. Çак чĕлхе паянхи куна çитиччен упранса юлнă, çав вăхăтрах пăлхарсен чĕлхи пĕтсе ларнă.*

*Çакна та палăртмалла: юлашки вăхăтра хăшпĕр тĕпчевçĕсем хамăр халăхăмăр ятĕнче* ***сăвар*** *е* ***чăваш*** *терминсемпе усă курасси пирки мăнаçланса тавлашни вырăнсăр пушă сăмах çапни кăна. Куна çак кĕнекене тимлĕн вулакан пĕр иккĕленмесĕр ăнланнине шанас килет.*

Турунсем (чăвашла – ТĂРĂНСЕМ) таврвари нумай-нумай ялсенчи хура халăхшăн чи аслă улпутсем шутланнă, вĕсене пăхăнтарса, хăратса, хăйсемшĕн ĕçлеттерсе, вĕсен шучĕпе тăранса, тумланса, ырă курса пурăннă. Апла пулин те, **тăрăнсем** хăйсене пăхăнса тăракан çынсем хушшинче пурнăç темĕнле йывăр пулнă вăхăтсенче те йĕркине тытса пынипе тури чăвашсен историнче пысăк пĕлтерĕшлĕ. Ахальтен мар икĕ пин çул хыçа юлсан та тури чăвашсем ТĂРĂН сăмаха манăçа кăлармаççĕ.

Çапла ĕнтĕ, кашни патшан хăйĕн патшалăхĕ пулнă евĕр, кашни пысăк улпутăн (тăрăнăн) хăйĕн **УЛПУТЛĂХĔ** пулнă теме пултаратпăр. Пурăнасса та тăрăнсем хура халăхран уйрăм çĕрте, пысăк та чаплă, тăшман çăмăллăн кĕрсе каймалла мар лайăх çирĕплетнĕ кил-çуртра пурăннă. Кунта тарçăсем йышлăн ĕçленĕ. Тăрăнсен кил-çуртне, вĕсен пурлăхне кунĕн-çĕрĕн хĕçпăшаллă çынсем сыхланă. Тăшман таврашĕ вăрçăпа тапăнса килес пулсан, тăрăнсем хăйсене пăхăнса тăракан ялсенчи çынсенчен çар пухнă, ăна ертсе тăшмана хирĕç тухнă, çапăçусене те вĕсемех йĕркелесе пынă. Тăрăнсен çар валли хĕçпăшал, апат-çимĕç упраса тытмалли уйрăм вырăн та пулнă, кунта хĕçпăшал юсама, ăна çĕнĕрен тума пĕлекен ăстасем ĕçленĕ.

Халĕ каланисене акă мĕнле тĕслĕх çирĕплетсе кăтартать.

Шупашкар районĕнчи Тăрăн ялĕнчен кăнтăр-хĕвеланăç еннелле пĕр тăватă çухрăмра, Лепетер ялĕпе çывăх, Тарăн-çырма ятлă пысăк ял пур. Вăл, чăн та, çав тери сарлака та тарăн çырма пуçĕ тавралла выр-

naçнă. Çырми тахçан авал шурлăх хĕрринче пулнă. Ялпа юнашарах, çырман чăнкă хысакĕнче, пысăках мар (тăршшĕ 120 м, урлăшĕ 55 м) тăваткал тӳрем лаптăк пур. Ăна кунти çынсем ĕмĕртенпех Хула ту теççĕ. Эппин, вăл кунти тăрăнăн (улпутăн) карманĕ (тăшмансенчен хӳтĕленмелли хулашĕ) пулнă. Тарăнçырма ялĕ те шăпах çак хулаша хураллакан тата унта ĕçлесе пурăнакан çынсен килĕсенчен пуçланса кайнă.

Николай Александрович Архангельский (1861 – >1930) – Мăн Шетмĕри чиркӳ пупĕ акă мĕн каланă Тарăнçырма ялĕ çумĕнчи хулаш çинчен:

«Городище Хола-ту находится в 6 верстах от села Туруново на западе: около восточной околицы деревни Тарынсирма? Хола-ту в (переводе на русский язык – городская гора) представляет собою сильно возвышенную плоскость, окаймленную с трех сторон (в., ю. и з.) оврагами, из которых южный овраг есть речка Мун сирма. Городище приходится на левом берегу речки Мун сирма, Тарын сирма тож. Осмотрено оно мною 9-го августа 1897 года по указанию чувашина деревни Тарын сирма Никиты Данилова, жавшего неподалеку рожь, в сопровождении его сына.

Высота площади городища со стороны речки – сажень15; со стороны восточного оврага – сажень 8; с западного – сажень 6; с севера же она не превышает трех сажень. Городище Хола-ту окружено с с., з. и в. большим валом и рвом, которые с ю. не заметны вовсе. Занимаемая городищем площадь представляет удлиненный квадрат. С с. на ю. насчитал по нему 120 шагов, с в. на з. – 56 шагов. Окружность городища (по основанию) равна 500 шагам. На всех четырех концах Хола-ту имеются высокие конусообразные с тупою вершиною возвышения: с.-з. Угол, по моему измерению, оказался вышиною до двух саженей, с.-в. – 1,5 сажени; остальные концы или углы: ю.-з. и ю.-в. – не более одной сажени. В общем, все стороны городища вышиною немного менее сажени. Ров, окаймляющий Хола-ту, глубиною в две четверти, а шириною в 0.5 аршина. Позади северо-западного возвышенного угла находится продолговатая яма в длину сажени три, в ширину – одна сажень и а глубину – 1.5 сажени. В середине северной стороны городища вала не заметно: тут, должно быть, были ворота для въезда на городище. Длина восточного и западного валов равняется 73 шагам, а северного и южного – 43 шага. Площадь городища не запахана.

Внутри городища Хола-ту я заметил симметрично расположенные ямы. Находятся они (числом, помнится, пять) на вершине северо-западного конусообразного возвышения (угла). Идут ямы рядами. По длине площади городища я насчитал шесть рядов ям, в ширину – четыре. Глубина этих ям достигает 0.5 аршина; ширина и длина равняются ¾ аршина. Эти ямы, очень может быть, образовались вследствие того, что местные чуваши (крестьяне деревни Тарансирмы) извлекали из земли разнородные железные вещи. Почву городища составляют глина и песок.

Ниже городища Хола-ту в одной версте от него вниз по течению речки Мун сирма, на левой (северной) стороне ее, находится деревня Лебедер. Между этой деревней и городищем на одинаковом – полуверстном – расстоянии находится на том же левом берегу небольшой овально-круглый курган под названием Хола-тюмеске. Курган этот по окружности имеет приблизительно 200 шагов, высота же равна 1 сажень

В расстоянии 1,5 версты от Хола-ту на ю.-з. находятся еще два кургана, лежащие на земле чуваш деревни Сесмеры Больше-Шатьминского прихода.

/Архангельский Н.А. Археологические достопримечательности Ядринского уезда Казанской губернии. Известия Общества археологии, истории и этнографии, том 16, выпуск 2, Казань, 1910, стр. 213-225/.

Каярахпа Тарӑнҫырма, Лепетер тата ку ялсенчен тухнӑ ҫынсем никӗсленӗ Лапракасси, Тойтереккаси (Мӑнастир ялӗ), Хӑймалакасси, Чуралькасси (Отикасси), Эльменкасси, Энтимӗркасси ялӗсене Иккӗмӗш Тӑрӑн ял ушкӑнне кӗртнӗ.

Атӑлӑн сулахай енчен Вырӑх (Урак) ӗмпӳпе пӗрле килнӗ чӑвашсен несӗлӗсем те вӑхӑт иртнӗ майӗпе тури чӑвашсемпе ҫармӑссен йӑлайӗркисене, вӗсен чӗлхинчи уйрӑмлӑхсене йышӑннӑ. Ҫапла вара, 922 ҫултан пуҫласа, тури чӑвашсен йышӗ палӑрмаллах ӳсет. Кунсӑр пуҫне XI–XVII ӗмӗрсенче те тури чӑвашсен шутне ытти вырӑнсенчен тӗрлӗрен сӑлтавсене пула куҫса килнӗ чӑвашсем йышлӑн хутшӑннӑ. Ҫакна та палӑртмалла: XX ӗмӗрте, е тата татӑклӑнрах калас пулсан, Раҫҫей империнче советсен влаҫне тунӑранпа, турипе анатри чӑвашсем хушшинчи уйрӑмлӑхсем питӗ хӑвӑрт якалса, ҫухалса пыраҫҫӗ. Паллӑ, ҫакӑн сӑлтавӗсем питӗ нумай енлӗ. Апла пулин те, тӗпрен илсен, ҫаксене палӑртмалла: тури чӑвашсемпе анатрисен ӳссе пыракан ҫамрӑкӗсем ялсенчен хуласене куҫса кайса унта пӗрле хутшӑнса пурӑнма пуҫла-нинче, шкулсенче чӑваш чӗлхине пурне те анатри чӑвашсен чӗлхине тӗпе хурса пӗр пек вӗрентнинче.

X ӗмӗр вӗҫӗнче чӑвашсем Атӑл хӗрринче хӑйсен ятне пысӑках мар хула тунӑ. Ӑна, анатри чӑвашсем Атӑлӑн сулахай енче хӑйсем пурӑннӑ ҫӗрте никӗсленӗ пысӑк та чапа тухнӑ Сӑвар хулине чыса хурса, Вӗтӗ Сӑвар ят панӑ. Ҫармӑссем ҫак хулана Сӑваскар (сӑвас хули) тенӗ. Ҫав Вӗтӗ Сӑвар хули ӗнтӗ хальхи Шупашкар хулин никӗсӗ шутланать.

Шупашкар хулине хӑҫантарах тата камсем никӗслени ҫинчен чӑвашсен паллӑ историкӗ В.Ф. Каховский акӑ мӗнле каланӑ. «С 1963 года в зоне затопления г. Чебоксар проводятся стационарные археологические исследования. ...в левобережной части города в низовьях реки Чебоксарки найдены типично болгарские изделия (керамика, предметы украшения, металлические предметы: стрелы, замки и т. д.)». «При раскопках в Чебоксарах ...открыты остатки ювелирной мастерской, нижние венцы деревянных строений, сыродутный горн. Весь этот культурный комплекс свидетельствует о том, что в низовьях р. Чебоксарки еще в домонгольское время появилось болгарское поселение городского типа – ремесленно-торговый центр. Отсутствие керамики и других вещей городецкого типа в напластованиях, залегавших

в нижних слоях раскопов, показывает, что город основали пришлые болгары, среди которых были искусные ремесленники». (39).

Анчах та хальхи вăхăтра Шупашкар хули хăçан пуçланса кайни çинчен урăхла шутлакансем те пур. *)

---

*) 1969-1973 çулсенче СССР Наукăсен академийĕн Археологи институчĕ йĕркеленĕ экспедицийĕ Шупашкар хулин историне тĕпчесе археологи ĕçĕсене тунă. Экспедици пуçлăхĕ чăвашсен паллă ученăйĕ истори ăслăлăхĕсен докторĕ В.Ф. Каховский профессор пулнă. Вăл, тĕпчев ĕçĕсене пĕтĕмлетсе, Мускавра “Наука” издательствора 1978 çулта «Вăтам ĕмĕрти Шупашкар» кĕнеке пичетлесе кăларнă. Унсăр пуçне Василий Филиппович Каховский 1970 çулсенче “Коммунизм ялавĕ” тата “Советская Чувашия” хаçатсенче Шупашкар хулине XIII ĕмĕр вĕçĕнче никĕслени çинчен археологи тĕпчевĕсем çине таянса хатĕрленĕ наука статйи çырса кăларнă.

1929 çулта П.П. Ефименкопа П.Н. Третьяков археологсем СССР Наукăсен академийĕ янипе Шупашкарта археололги ĕçĕсем тунă. Вĕсем çĕр сийĕсене чавса тупнă тăм чашăксем, савăт-сапа, тимĕр япаласем, эрешсем тата ыттисем тăрăх кунта XIII ĕмĕрте хула евĕрлĕ вырăнта пăлхарсем йышлăн пурăннине палăртнă.

Португали çулçӳревçи Фра-Мауро хăйĕн 1459 çулхи картти çинче хальхи Чăваш çĕрне Амазони ятпа тата Шупашкар вырăнĕнче Веда-Суар хулине кăтартнă.

Хуласен историне тĕпчекен ученăй, истори ăслăлăхĕсен докторĕ В.Л. Егоров акă мĕнле шутлать: «1963-1973 çулсенче чавса тупнă материалсем çирĕплетнĕ тăрăх Шупашкар кĕске вăхăтрах – монголсем тапăннă тата Атăлçи Пăлхар патшалăхне аркатнă тапхăрта – пулса кайнă. Археологи материалĕсем, паллах, çакă шăпах хăш çула тивнине палăртма пултараймаççĕ, анчах вĕсене истори тĕлĕшĕнчен пĕтĕм-летсе хак парсан, çав тапхăр XIII ĕмĕр варрипе танлашать. Тепĕр майлă, çав датăна 1255 çулпа шайлаштармалла». (“Хыпар” хаçат, 2005, кăрлач, 22).

Чăвашсен паллă ученăйĕсем те – истори ăслăлăхĕсен докторĕ Валерий Сергеевич Григорьев, искусствоведени ăслăлăхĕсен докторĕ Алексей Александрович Трофимов тата Василий Дмитриевич Дмит-

риев академик – В.Л. Егоров ҫирӗплетсе каланипе килӗшеҫҫӗ. В.Д. Дмитриев ҫапла ҫырать: «1236 ҫулта Атӑлҫи Пӑлхар ҫӗршывне Бату хан ҫарӗсем аркатаҫҫӗ... XIII ӗмӗр ҫурринче Пӑлхар ял-хулине кусса ҫӳрекен халӑхсен эшкерӗсем тепӗр хут тӗппипех аркатаҫҫӗ. Халӑх пӑлхавӑрлӑ, ҫапӑҫу-аркатуллӑ пурнӑҫа чӑтаймасть. Ахӑртнех, Сӑвар хулин ҫынисем паянхи Шупашкар вырӑнӗнче Вӑта Сӑвар*) никӗслеҫҫӗ». («Хыпар» хаҫат, 2005, нарӑс, 10. Василий Дмитриев академик: «Кӑҫал тӗп хуламӑрӑн 750 ҫулхи юбилейне уявламалла» статья тӑрӑх).

Тури чӑвашсем хӑйсем ҫине тапӑнса килекен тӑшмансенчен хӳтӗленме хуласем те сахал мар тунӑ тесе калама пултаратпӑр. Чӑн та, паянхи куна ҫити ку хуласем упранса юлман, анчах та Ҫавал тӑрӑхӗнче вӗсем пулнине ҫирӗплетсе кӑтартакан ятсем темиҫе те пур. Маларах асӑннӑ Тӑрӑн патӗнчи Хулату ятлӑ вырӑнсӑр пуҫне ҫаксене палӑртар: Мускаринкасси (Шупашкар районӗнче) патӗнчи Холату Киремет Ҫырми, Вӗрмер ялӗ (Ҫӗрпӳ районӗнче) патӗнчи Холету Ҫырми, Сурӑм шывӗ патӗнчи Хлату ҫырми, Хирлеп шывӗ ҫывӑхӗнчи Холтуй ҫырми, Пӗчченхыр (Марпосад районӗнче) ялӗн патӗнчи Холасӑрт Ҫырми, Мӑн Шетмӗ ялӗ патӗнчи Хола вырӑнӗ тата Холасвар ҫырмисем. /29/. Ку тӗслӗхсем тури чӑвашсен тӑшманӗсем те сахал мар пулнине, ку тӑшмансене тивӗҫлипе тавӑрма чӑвашсем ялан хатӗр пулнине ӗненмелле ҫирӗплетсе кӑтартаҫҫӗ.

---

*) Ҫак хулан ятне, пирӗн шутпа, Вӑта Сӑвар мар, пачах урӑхла, Вӗтӗ Сӑвар темелле – ку тепӗр майлӑ Пӗчӗк Сӑвар тенине пӗлтерет. Хула ятне чӑвашла Вӑта Сӑвар тесен, Атӑлҫи Пӑлхар патшалӑхӗнче Сӑвар ятлӑ хуласем сахалтан та виҫҫӗ пулнӑ шутланать: асли, вӑтамми тата кӗҫӗнни. Пулнах-ши вара кун пек хуласем? Историне икӗ хула кӑна паллӑ – Сӑвар тата Вӗтӗ Сӑвар.

Тӗлӗнмелле мар-и-ха тата ҫакӑнтан: В.Д. Дмитриев каларӑшле, «XIII ӗмӗр ҫуринче Пӑлхар ял-хулине кусса ҫӳрекен халӑхсен эшкерӗсем тепӗр хут тӗппипех аркатаҫҫӗ», ҫав вӑхӑтрах –- 1255 ҫулта –- Бату ханӑн ҫар ҫыннисем тискеррӗн иртӗхнинчен хӑранипе ҫармӑссем патне тарса пынӑ анатри чӑвашсем Атӑл хӗрринче Вӑта Сӑвар хулине туса лартаҫҫӗ?.

Таврари ял-хуласем вутра ҫунса кӗлленнӗ вӑхӑтра, тапӑнса килнӗ тӑшманпа пӗтӗм халӑх вилӗмлӗ тытӑҫусенче ҫапӑҫнӑ хушӑра мӗнлерех ҫынсем тупӑннӑ-ши Атӑл хӗрринче Вӑта Сӑвар хулине туса лартма?

Атăлçи Пăлхар патшалăхне йĕркелесен те тури чăвашсем унăн тытăмĕнчен тухман, анчах вĕсен хăйсен аслă улпучĕсем е ĕмпĕвĕсем пулнă. (Тури чăвашсем **ĔМПӲ** тенĕ евĕрлĕ çын анатри чăвашсемшĕн **ПАТША** шутланнă). (14). Анатри чăвашсем хăйсен аслă хуçине мĕншĕн ПАТША тенинчен тĕлĕнмелли çук – вĕсем 500 çула яхăн кăнтăрта Перси çĕршывĕ çывăхĕнче пурăннă, унта **ПАДИШАХ** тесе кама каланине тавçăрса илме йывăр мар. Авалхи тури чăвашсем вара, Вăта Уралпа Анат Кама тăрăхĕсенче пурăннăран, ПАДИШАХ сăмаха илтмен те, вĕсемшĕн хăйсем Алтай тăрăхĕнче пурăннă вăхăтранпа пыракан ĔМПӲ сăмах çывăх пулнă.

# Тури чăвашсем патĕнчи хăшпĕр ялсен тата юханшывсемпе çырмасен ячĕсем.

**Ч**ăваш Енĕн çурçĕр пайĕнче, уйрăмах хальхи Вăрнар, Етĕрне, Муркаш, Хĕрлĕ Чутай, Çĕмĕрле, Çĕрпӳ, Шупашкар, Элĕк районĕсен çĕрĕсем çинче, кунта пулас тури чăвашсем пĕр 200 çулсен вĕçнелле килсе вырнаçиччен, Выл, Енĕш, Кăшканар, Кинер, Конар, Куснар, Муркаш, Сăр, Сурăм, Çавал, Ункă, Шетмĕ, Шинер, Ытмар шывĕсем тата ытти нумай-нумай çырмасемпе юханшывсем çывăхĕнче авалхи çармăссем тата унта-кунта мордвасем (мокшă тата ирçе) пурăннă. Çавăнпа кунти юханшывсем те, вĕсем пурăннă ялсем те ку тарана çитиччен авалхи çармăссем е мордвасем панă ятсемпе паллă. Тĕслĕхрен, акă мĕне пĕлтереççĕ мордвасем панă çак ятсем: Мошкасси е Ирчекасси – мокшă е ирзе сăмахсенчен, Енçейкасси – ирçеле инзей – хăмла çырли.

Ункă шывĕн тăрăхĕнчи хăшпĕр ял ячĕсене пăхса тухар-ха. Акă, тĕслĕхрен, çармăс сăмахĕсем Лепетер – серепе е тапă, Марка – шур чул, ÇеÇмер – мăк куракĕ, Шинер – таса шыв. Ытмар (вырăсла Итмар) ялĕн ячĕ авалхи çармăссен Кутемар сăмахĕнчен тухать пулмалла. Çак сăмах авалхи çармăссен чĕлхинче пысăк юманлăх тенине пĕлтернĕ (34). Эппин, икĕ пин çул каялла, тури чăвашсем ку тăрăха куçса киличчен, хальхи Ытмар ялĕ ларакан çӳллĕ тĕпекĕн кăнтăр-хĕвелтухăç хысакĕнчен пуçланакан чăнкă та тарăн çырма пуçĕнчи юманлăхра çармăссем пурăннă.

Питех те чаплă вырăнта, çутçанталăк панă ырлăхпа усă курса савăнса пурăннă çак авалхи çармăс çыннисем: кил-çурт тавралла пысăк юманлăх, кирек хăш еннеле те вĕçĕ-хĕррисĕр сарăлса выртакан сĕм-сĕм вăрман, хăйсем пурăнакан юманлăхри вăйлă çăлкуçĕсенчен пуçланакан çырма шывĕ шăнкăртатса Кăшканараллаваскать. Вăл Кăшканарпа пĕрле-шес умĕн лачакаллă пысăках мар шурлăх тăрăх юхать. Унта иртсе çӳреме çук хăвалăх чăтлăхĕ. Ахальтен мар Хăва кати тенĕ ăна кунти çынсем. Пуян та мехеллĕ вырăн: вăрманта – мамăк тирлĕ тĕрлĕрен тискер кайăксем, шурлăхра – кĕтĕвĕ-кĕтĕвĕпе кайăк кăвакалĕсем, Кăшканарпа Ункăра – темĕн чухлĕ пулăсем хĕвĕшеççĕ.

Чăваш Ен картти çинче Ункă шывне çăмăллăнах тупма пулать. Вăл Атăлпа юнашарах Шупашкар хулинчен кăшт тăварах пуçланать те, хăйĕн икĕ енчен те юхса пыракан нумай-нумай пĕчĕк çырмасен шывĕсене пуçтарса, малтан кăнтăралла юхать, кайран Ишек ялĕ çывăхĕнче хĕвел-тухăçнелле çавăрăнать, çавăнтах Муркаш шывĕпе пĕрлешет. Ку вырăнта анлă улăх пуçланать. Тулли шывлă Ункă, çак улăх тăрăх юхса, Çĕрпӳ хулинчен кăнтăр-хĕвеланăç енче пĕр çичĕ çухрăмра Аслă Çавалпа пĕрлешет.

Ишекрен пиллĕк çухрăма яхăн анаталла Ункăна сылтăм енчен Кăшканар шывĕ юхса кĕрет. Вăл Лепетер ялĕ патĕнче пуçланса çурçĕр-хĕвелтухăçнелле юхать. Унăн тăршшĕ сакăр çухрăм пулать пулĕ. Вăл хăйĕн çулне Вăрăм уй ятлă çӳллĕ тĕпекĕн кăнтăр енĕпе хывнă. Сылтăмран Кăшканара унпа пĕрешкелтерех Шинер тата Ытмар çырмисен шывĕсем юхса кĕреççĕ. Ытмар çырмин вăрринче Вăрăм уй вĕçленет, Кăшканарăн ансăр улăхĕ Ункă улăхне куçать. Ку вырăнсенче Ункă улăхĕ сарлака та капăр. Сĕм авал ку вырăнсенче Муркаш шывĕ Ункăпа пĕрлешнĕ çĕртен пуçласа Паттăръял патне çитиччен талккăшпех пысăк шурлăх тăсăлса выртнă. Ункă шывĕ вара вăрăм та çӳллĕ тĕпекĕн кăнтăр енĕпе çак шурлăхпа юхнă. 1793 çулти карта çинче çак анлă улăхăн Малтикас (Шурти Марка) ялĕн çумĕнчи пĕр анлă лаптăкне Пăлан шурĕ тесе кăтартнă, çывăхри Сархурăн вăрманĕнчи пысăк çырмана, унта пурăшсем нумай пулнăран ĕнтĕ, Пурăш варĕ тесе палăртнă.

Асăннă юханшывсем авал çак пысăк шурлăхра кăшт кăна палăрса выртнă, çавăнпа та вĕсен ячĕсем те хăйсене евĕрлĕ: Ункă (Онга) сăмаха **юхакан шыв**, Кăшканар (Кошканар) сăмаха **имшеркке шыв** тесе ăнланмалла, Чатукасси çумĕпе юхса Ункăна кĕрекен Куснар çырми **кăвакал шывĕ** тени пулать. Ахăртнех, ку таврашра кайăк кăвакалĕсем çав тери йышлă пурăннă. Калас пулать, хальхи вăхăтра Çавалпа Енĕш шывĕсем тăрăхĕнче КУСНАР ятлă ялсемпе çырмасем темиçе те пур. Марка ялĕсем çывăхĕпе Ункăна юхакан Кăкар (Кукар) шывĕн ячĕ венгрла **хăмăшлă шыв** тенине пĕлтерет.

Мăн Енĕш шывĕн пуçĕнчи çĕрсем çинче хальхи вăхăтра анат енчи чăвашсем пурăнаççĕ, тесе калаççĕ. Пирĕн шутпа, ку вырăнсенче чăвашсем 200-300 çулсенчех пурăнма пуçланă, мĕншĕн тесен çак таврари чылай ялсен ячĕсен тытăмĕнче венгрсенчен тури чăвашсен ка-

лаçу чĕлхине кĕрсе юлнă «касси» сăмах пур. Эппин, вăл тапхăрта çак ялсене никĕс-лекенсем тури чăвашсемпе венгрсем пулнă. Анчах каярахпа, анатри чăвашсем Çурçĕр Кавказран Атăл тăрăхне килсен, вĕсенчен хăшĕсем Алмуш патша вăхăтĕнчех тата теприсем монгол-тутарсенчен хăранипе 1236 çул хыççăн çак çĕрсем çине тарса пытаннă та, тури чăвашсемпе çĕршер çулсем тăршĕнче тачă хутшăнса пурăннăран, **анат енчи чăвашсем** пулса кайнă. Çапла ĕнтĕ, анат енчи чăвашсем вырăнти çармăссемпе Арск енчен куçса килнĕ чăвашсенчен кăна пулса кайнă тенине (34) питĕ витĕмлĕ чăнлăх шутне хума çук.

Мăн Енĕш шывĕн пуçĕнчи çĕрсем çинче те авал вĕçĕ-хĕррисĕр вăрмансем кашланă, унти çырмасен таврашĕнче 200 çулсемччен чăвашсем мар, çармăссемпе мордва (мокшă) çыннисем пурăннă. Çакăн пирки эпир паянхи кунсемченех сыхланса юлнă юханшывсемпе ялсен ячĕсем тăрăх шанчăклăн калама пултаратпăр. Акă, Куславка районĕнчи хальхи Çăкалăх (Липово) тата Çатрăк (Малое Бишево) чăваш ялĕсем ĕлĕкрех Мокшино ятлă пулнă. Ку тăрăхри ятсем нумайăшĕ çармăссемпе венгрсен чĕлхисеннчен юлнă. Сăмахран, çак тăрăхра юхакан Енĕш (Аниш), Урхас (Арбаш, Аргас), Итнескер, Шинер, Чинер (Чиняр) шывĕсен ячĕсем – çармăс-сенчен е венгрсенчен юлнăскерсем. Тĕслĕхрен, **Урхас** шывĕн ячĕ венгрсен чĕлхинче **хурал килĕ** (ялĕ) тенине пĕлтерме пултарать. Çапла ĕнтĕ, Çавал шывĕн тăрăхĕнче тури чăвашсемпе пĕрле венгрсем те сахал мар пурăннине венгрсен чĕлхинчен кĕрсе юлнă чылай сăмахсем çирĕплетсе кăтартаççĕ. Акă, тепĕр тĕслĕх, Красноармейски районĕнчи Кăлава Шетмĕ ял ятĕнче КЕ сăмах венгрла ЧУЛ, ЛЕВЕ сăмах ПЕРЕКЕН тенине пĕлтереççĕ, Чатуккасси ялĕн ятĕнче ЧАТА сăмах ÇАПĂÇУ, КАССИ (хаза) сăмах ЯЛ е УРАМ (çынсем пурăнакан вырăн) тенине пĕлтереççĕ. Акă тата мĕнле пĕлтерĕшлĕ авалхи çармăссен чĕлхинчен юлнă Çĕрпӳ районĕнчи ял ячĕсем чăвашла: КУСНАР – "кăвакал çырми", ЛИПСЕР – "мулкач çырми", ПОШНАР – "уйри çырма", ТУПНЕР – "чăнкă юханшыв, çырма", ШИНЕР – "таса юханшыв", КОШКО – "имшеркке", ТЮРАР – "тӳрĕ", ТЮНСАР – тюн "хуран", сар "шурлăх", УШАНАР – "çутă юханшыв" (Канаш районĕнче).

Тепĕр чухне çырмасемпе ялсен ячĕсем мĕнлне пулса кайнине хăшĕ-пĕрисем тĕлĕнмелле ăнлнтарма пикенеççĕ. Акă, сăмахрен, Çĕрпӳ районĕнчи Пошарпуç /Байдуши/ ялĕн ячĕ ку ялта пулнă питĕ вăйлă

пушарпа çыхăннă, теççĕ. Тĕрĕссипе пачах урăхла – ял ячĕ çывăхра вырнаçнă Пошнар çырми ячĕпе çыхăннă, ăна Пошнарпуç темелле. /Çырми ятне шоссе çинчи кăтарту хăми çинче Пожанарка тесе çырнă/

Нефтепровод трасси çинчи насус станцине тăвассине пула çур ĕмĕр каялла никĕсленĕ Конар поселокĕн ячĕ çывăхра юхса иртекен Мăн Енĕш шывĕн Конар ятлă çырма юппипе çыхăннă. КОНАР сăмах та чăвашсен мар. Вăл авалхи çар-мăссен К,АН – "чуллă" тата ЭНГЕР – "юханшыв" сăмахĕ-сенчен пулать. КИНЕР, КОНАР, КОНЕР, КОНЯР, КУНЕР сăмахсем пурте пĕр тĕпрен улшăнса пулнă сăмахсем пулма пултараççĕ, чăваш чĕлхинче ЧУЛЛĂ ЮХАНШЫВ тенине пĕлтереççĕ. (34).

Кунашкал тĕслĕхсене тата нумай шута илсе тишкерме пулать. Вĕсем пурте икĕ пин çула яхăн каялла тури чăвашсем Вăта Уралтан Атăлпа Кама тăрăхне венгрсен пĕчĕк ушкăнĕпе пĕрле пĕр вăхăталла куçса килсе çĕнĕ вырăнта çармăссемпе мордва халăхĕсен хушшинче сапаланса пурăнма вырнаçнине татăклăн çирĕплетсе кăтартаççĕ.

# Хыҫсӑмах вырӑнне

**С**ӑмаха вӗҫленӗ май, вулакансене ҫакна каласшӑн килет.

Паянхи кун пурӑнакан кашни чӑваш ҫынни, вӑл хӑйне чӑнипе чӑваш тесе шутлать пулсан, никам умӗнче пӗр вӑтанмасӑр, пӗр хӑрамасӑр, (каппайланса мар, пач урӑхла, чӑн тивӗҫлипе мӑнаҫлӑн кӑкӑр тулли мухтанса), хӑюллӑн ҫапла каламалла: *«Эпӗ — чӑваш! Ҫӗр ҫинче ҫак тарана ҫитиччен пурӑнакан чи авалхи халӑхсенчен пӗрин, халиччен хӑйӗн сӑнне ҫухатман, ыттисем умӗнче ятне вараламан, мухтавлӑ та ырӑ ӗҫсемпе тӗнчипе чапа тухнӑ чӑваш халӑхӗн ҫынни»!*

Чӑваш халӑхӗ тӗнчере ултӑ пин ҫула яхӑн каялла шумерсен ҫӗрӗ ҫинче тымарланнӑ. Ҫавӑнтанпа тӑсӑлакан хӑйӗн кунҫулӗнче ӑҫта кӑна ҫитсе тухман пулӗ чӑваш халӑхӗ, ӑҫта кӑна шӑтса юлман пулӗ унӑн хунавӗсем! Нумай-нумай вырӑнсенче – Египетра та, Европӑпа Азири чылай ҫӗршыв-сенче те пур чӑваш ҫыннин йӗрӗсм! Паллӑ, ҫав хунавсенчен ӳснӗ йывӑҫсем паянхи куна ҫитиччен паллама ҫук улшӑннӑ, анчах вӗсен сӗткенӗнче, вӗсенчен тӑсӑлнӑ ҫынсен йӑхӗсен юнӗнче, чӑваш халӑхӗн юнӗ пӗр йӗр хӑвармасӑр ҫухалман! Вӗсем – халь пирӗншӗн ют халӑхсем шутланакансен чӗлхинче паянхи кун та тӗл пулакан чӑваш сӑмахӗсем, пиншер ҫулсем хушши упранса пурӑнакан археологи палӑкӗсенчи савӑлла ҫырусене чӑвашла вулама май пуррисем!

Шумертен тухнӑранпа авалхи чӑвашсем виҫӗ пин ҫул хушши Вӑта Азинче пурӑннӑ, вӑл шутран 365 ҫула яхӑн – Аслӑ Хунгари империнче. Ҫӗнӗ эрӑчченхи 165 ҫулта шӑпа авалхи чӑвашсене икӗ пая уйӑрса ярать: пӗрисем Алтай ҫӗ-рӗсем ҫинче, Зайсан кӳллине юхса кӗрекен Хура Иртыш таврашӗнче юлаҫҫӗ, теприсен кунтан кӑнтӑрарах выртакан Турфан путӑкне куҫса кайма тивет. Ҫапла 321 ҫул хушши пӗр пӗринчен уйрӑм пурӑннӑ хыҫҫӑн, 156 ҫулта чӑвашсен икӗ пайӗ те ытти халӑхсемпе пӗрле Вӑта Азинчен Европӑна тухса тараҫҫӗ: Турфан путӑкӗнче пурӑннӑ чӑвашсем – Ҫур-ҫӗр Кавказ тӑрӑхне, Хура Иртыш патӗнчи чӑвашсем – ҫурҫӗрелле, Тобол шывӗ Иртышпа пӗрлешнӗ вырӑна ҫитиччен.

Ҫапла ӗнтӗ, тури чӑвашсен историйӗ хӑйне евӗр уйрӑмлӑхсемпе пуян. Вӗсем, тури чӑвашсем, Алтайран тухнӑранпа 730 ҫулсемчен

анатри чăвшсенчен пачах уйрăммăн, çав хушăрах ытти чылай халăхсемпе юнашар пулса, хăшĕ-пĕрисемпе нумай çулсем хушши питĕ тачă хутшăнса, пĕр-пĕрине вăйлă хистесе пурăннă. Çакнашкал халăхсенчен уйрăмах венгрсене тата çармăссене палăртмалла. Ахальтен мар çак виçĕ халăхăн чĕлхисенче, йăлă-йĕркисенче, çи-пуçĕнче, пурнăçри тата ытти енсенче те пĕрпеклĕхсем авалтанпа нумай упранса юлнă. Шăпах çакнашкал пĕрпеклĕхсем пурри тури чăвашсем 600 çула яхăн анатри чăвашсенчен пачах уйрăммăн пурăннине çирĕплетсе кăтартать. Çак хушăрах, анатри чăвашсем перси халăхĕсемпе тата хазарсемпе (тĕрĕсрех каласан, Хазар каганатĕнче тĕп халăх шутланнă еврейсемпе) чылай вăхăт хутшăнса пурăннăран, вĕсен çак халăхсенчен йышăннă хăйне евĕр уйрăмлăхсем нумай.

Анатри чăвашсемпе тури чăвашсем çĕнĕрен тĕл пулнăранпа, вĕсем пĕр-пĕринпе юнашар пулса хутшăнса пурăнма тытăннăранпа 1270 çула яхăн иртнĕ. Çавăнпа та вĕсен хушшинче пулнă уçăмлăнах палăракан малтанхи уйрăмлăхсем майĕпен тĕксĕмленсе, якалса, çухалса пыраççĕ. Юлашки çĕр çул тăршĕнче çак уйрăмлăхсем уйрăмах хăвăрт пĕтсе пынă. Çапла пулма ытларах çак сăлтавсем хистенĕ: чăвашсен националлă территори автомине йĕркелени, шкулсенче ачасене чăвашла анатри чăвашсен чĕлхине тĕпе хурса йĕркеленĕ программăпа вĕрентни, ял çыннисем питĕ йышлăн Чăваш республикинчи хуласене куçса кайса пурăнма тытăнни тата çак условисенче анатрипе тури чăвашсен ывăлĕ-хĕрĕсем хутăшла çемьесем чăмăртани.

2007 çул.

# Усă курнă литература.

1. Хрестоматия по истории и языку чувашского народа. Уфа, 1995.

2. Антей Илитвер. От гипотезы дрейфа материков к гипотезе происхождения гуннов – предков чувашей и других тюркских народов, Чебоксары, 1993.

3. Гумилев Л.Н. Хунну. Степная трилогия. Тайм-Аут – Компасс. СПб., 1993.

4. Гумилев Л.Н. Тысячелетие вокруг Каспия. М., 1993.

5. Антей Илитвер. Происхождение верховых чувашей. Чебоксары, 2001.

6. Каховский В.Ф. Происхождение чувашского народа. Шупашкар, 2003.

7. Николаев В.В. Генеалогия чувашского народа. Фонд историко-культурологических исследований им. К.В. Иванова. Москва, 2004.

8. Знаменский М.С. Чувашский мыс. Из археолого-исторических набросков М.С. Знаменского. Тобольск, 1891.

9. Сутормин А.Г.. Ермак Тимофеевич (Аленин Василий Тимофеевич). Иркутск, 1981.

10. Карамзин Н.М. История государства Российского. Ростов-на-Дону, 1989.

11 Ишимова А.О. История России в рассказах для детей.
СПб., 1897.

12. Тенехпи Петр Михалкки (Петров М.П.) Чăваш историйĕ çинчен кĕскен каласа кăтартни. Малтанхи пайĕ. Тĕп историйĕн йĕрĕсем. Шупашкар, 1928.

13. Иванов В.П., Николаев В.В., Дмитриев В.Д.. Чуваши. Этническая история и традиционная культура. Москва, Изд. ДИК. 2000.

14. Ашмарин Н.И. Болгары и чуваши. Чебоксары, 2000.

15. Федотов М.Р. Исторические связи чувашского языка с волжскими и пермскими финно-угорскими языками. Часть II. Чебоксары, 1968.

16. Серебренников Б.А., член-корр. АН СССР. К истории звуков чувашского языка. Ученые записки ЧНИИ, вып. 14. Чебоксары, 1956.

17. Исследования венгерских ученых по чувашскому языку. Чебоксары, 1985.

18. Сабирзянов Г.С. Народы Среднего Поволжья и Южного Урала в панораме веков. Казань, 1995.

19. Янош Немеш. Знакомьтесь: Венгрия. Издательство ”Корвина”. Будапешт, 1974.

20. Малютин С.Р. Этногенез чувашского народа. Чебоксары, 2000.

21. Юхма Мишши. Авалхи чăвашсем. Истори калавěсем. Шупашкар, 1996.

22. Ковалевский А.П. Книга Ахмеда ибн-Фадлана о его путешествии на Волгу в 921-922 гг. Харьков, 1956.

23. Ковалевский А.П. Чуваши и булгары по данным Ахмеда Ибн-Фадлана. ЧНИИ. Уч. записки, вып. 9, Чебоксары, 1954.

24. Научный архив Чувашского государственного института гуманитарных наук. Отдел 2, ед. хран. 155, инв. № 348.

25. Спасский Н. Очерки по родиноведению, Казанская губерния, 1912.

26. Галкин И.С. Кто и почему так назвал. Рассказы о географических названиях Марийского края. Йошкар-Ола, 1991.

27. ЦГА ЧР. Ф. 2, Оп. 1, Д. 12. Указы разных присутственных мест на Чебоксарский штабной двор капитану Хлепову.

28. Списки населенных мест Российской империи по сведениям 1859 г. Том XIV. Казанская губерния, Царевококшайский уезд.
СПб., 1866.

29. Нестеров В.А. Над картой Чувашии. Историко-топонимические заметки. Чебоксары, 1980.

30. Иностранцев К.А. Хунны и гунны. Труды туркологического семинария. Т. I. Л., 1926.

31. Гумилев Л.Н. Открытие Хазарии. М., Айрис-Пресс, 2002.

32. Печников О.И., Печникова М.И. Чăваш сăмахě (Чувашское слово). Учебник чувашского языка для 8 класса русской школы. Шупашкар, 2000, с. 32.

33. Исследования по истории Чувашии и чувашского народа. Чувашский государственный институт гуманитарных наук. Выпуск 1. Чебоксары. 1997.

34. Иванов Л.И. Формирование этнографических групп и подгрупп чувашей (на территории Чувашии). Чебоксары, 1992.

35. Шпилевский С.М. Древние города и другие булгарско-татарские памятники в Казанской губернии. Казань, 1877.

36. Дмитриев В., ЧР ăслăлăхпа ӳнер наци академийěн академикě. Н.И. «Ашмарин пăлхарсемпе чăвашсен чěлхе тата этнос пěрлěхě çинчен вěрентни». «Хыпар» хаçат, авăн, 24-25, 1996.

37. В.В. Николаев. История предков чувашей. XXX в. до н.э. – XV в. н.э. (Хроника событий). Чебоксары, 2005.

38. Данилов В.Д., Павлов П.И. История и культура Чувашской Республики (с древних времен до начала XX века). Учебное пособие, часть I. Чебоксары, 1996.

39. В.Ф. Каховский, «О западных пределах Волжской Болгарии». Вопросы древней и средневековой истории Чувашии. Труды ЧНИИ, вып. 105, Чебоксары, 1980.

40. В.Ф. Каховский, «К истории чувашско-венгерских этнокультурных связей. (На материалах фольклора и ономастики)». //Исследования по древней и современной культуре чувашей. Чебоксары, 1987//.

41. Центральный Государственный архив Чувашской Республики. Ф.2, Оп. 1, Д. 6 Материалы 1-й, 2-й и частично 4-й ревизии населения г. Чебоксары и Чебоксарского уезда.

42. А. Русаков. Страницы чувашской истории. Мелеуз /Башкортостан/. 2006.

43. А.П. Смирнов. Древняя история чувашского народа (до монгольского завоевания), ЧНИИЯЛИ, Чебоксары, 1948

# Тупмалли

**Автор çинчен** ........ 3
**Малтан калани** ........ 5
**Чăваш халăхĕ пуçланса кайни** ........ 7
**Тури чăвашсем Вăта Урал тăрăхĕнче** ........ 16
**Тури тата анатри чăвашсем Вăта Атăлпа Анат Кама тăрăхĕнче** ........ 30
**Çавал тăрăхĕнчи Тăрăн улпутлăхĕ** ........ 38
**Тури чăвашсем патĕнчи хăшпĕр ялсен тата юханшывсемпе çырмасен ячĕсем** ........ 53
**Хыççăмах вырăнне** ........ 57
**Усă курнă литература** ........ 59

* * * * * * * * * * * * * * * * * *

**Николаев Виталий Николаевич**

# Тури (вирьял) чăвашсем

---

# Верховые чуваши

Авторское издание.
Николаев Виталий Николаевич.
Цивильск: 2011

* * * * * * * * * * * * * * * * * *




Чуваши: I-верховые, II-средненизовые, III-низовые